Рег. № 62.
91-128

МИГТА ПЕТĔРĔ

# КАЛАВСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ◆ ШУПАШКАР
1941

МИТТА ПЕТĔРĔ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВКИ
Чувашской книжной палаты
9 мая 1941 г.
№ 62

# КАЛАВСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ◆ ШУПАШКАР ◆ 1941

## ТУПМАЛЛИ


Стр.

1. Тимахви . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Сад варринче . . . . . . . . . . . . . . 28
3. Ача çуралнӑ . . . . . . . . . . . . . . . 40
4. Юлташ йӑмӑкӗ . . . . . . . . . . . . . . 50
5. Кузьма кум . . . . . . . . . . . . . . . 61
6. Дельфин тесе . . . . . . . . . . . . . . 69
7. Конюх . . . . . . . . . . . . . . . . . . 75
8. Тупа . . . . . . . . . . . . . . . . . . 84
9. Ашшӗ сӑмахӗ . . . . . . . . . . . . . . . 89
10. Дориада . . . . . . . . . . . . . . . . 96



Редактор **Н. И. КОЛЮШКИН.**

Подписано к печати 10/III-41 г. НТ 2440
Тираж 3000 экз. Формат бумаги 60×92 1/32 л.
Объем 3,25 печ. листа. Заказ № 363

Отпечатано в Цивильской типографии УИ и П

*Ку ĕҫĕме Вингер ывăлăма парнелетĕп.*

*Автор.*

# ТИМАХВИ

## I

Паян вăл хăйĕн канăҫсăр ҫамрăк кунҫулĕ ҫинчен каласа пачĕ.

Пĕлĕш командирсем, красноармеецсем, шефа илнĕ колхозран килнĕ хăнасем, рабочисем туха-туха калаҫрĕҫ. Юлашкинчен Горький сăнлă ватă рабочи: „Тимофей Димитриевич Мертлэ юлташ тĕрĕсленнĕ“ тесе евит турĕ.

Ытлашши нимех те калаҫмарĕҫ пек юлташсем. Председатель те хăйĕн сăмахне яланхи евĕрлех типпĕн пĕтерчĕ. Анчах мĕн чухлĕ вăй, мĕн чухлĕ кăмăл, юрату мĕн чул туймарĕ пуль Тимахви—ҫавă кас-кас хаваслăн, ҫывăххăн, ăшшăн, кас-кас хăюллăн, рапорт пек янравлăн илтĕнекен сăмахсенче. Темшĕн ăна ҫав сăмахсем ĕҫченĕн икĕ хăватлă алли пек туйăнчĕҫ, вăл хăй те сисмерĕ—тимĕр евĕр йывăр, сулмаклă алăсем ăна ҫăмăллăн ҫĕклесе илчĕҫ...

Хваттерне Тимахви ӳсĕрĕлнĕ ҫын пек таврăнчĕ. Акă халĕ те вăл лăпланса ҫитеймест·

Тантăш командирсем, красноармеецсем, рабочисем, колхозниксем теменшĕн халĕ те куç умĕнчех. Ватă рабочи тĕ акă çав-çавах пăхса тăрать, темĕнле вăрттăн кулă ун пичĕ синче палăрать...

Хăй синчен нихăçан шухăшлама хăнăхман Тимахвин паян пĕр хăйĕн çинчен çеç шухăшлас килет. Анчах шухăшсем темшĕн хуçине парăнмаççĕ, тĕлсĕр-мĕнсĕр чăлханса, пĕрин хыççăн тепри сиксе тухаççĕ... Акă вăл фронтра çапăçать... Çав хушăрах 20 çул ĕлĕк вилнĕ амăшĕ куç умне килсе тухать. Акă вăл çар больницинче аташса выртать... çав вăхăтрах халĕ те куçран кайми паçăрхи рабочин тĕлĕнтермĕш кулли унăн шухăшне тепĕр еннелле савăрать... Çытма йĕмпе чупса çӳрекен чăваш ачисем... Çĕтĕк сăхманлă ырхан кĕтӳççем... Тилĕрсе кайнă фронт... Çаруран салтаксем... Çĕмрĕк, юхăннă заводсем... Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлекен рабочисем, Хĕрлĕ Çар... Сывлăхлă çамрăксем... Командирсем — вăрçăри тантăшсем...,—çакăнта вăл хăйне шырать, хăйне çакăнта тупать, каллех çухатать, каллех шырать... Пин-пин пурнăççем, пин-пин кунçĕрсем, мухтавлă этемсен мухтавлă ĕçĕсем тинĕс пек хумханнă çĕрте вăл хăйĕн пĕчĕк киммине аран çеç курать. Анчах унăн кимми те, ытти пин-пин кимĕсем евĕрлех, юхăма хирĕç ишет, çиллĕ çанталăкăн хумшавĕ урлă икĕ кĕсменне çаптарать... Ятсăр

ача... Кĕтӳ ачи... Пĕчĕкçĕ кимĕ. Ятсăр ача— ятлă командир... Ăçтан ку? Епле? Ватă рабочи... Вăл халĕ те куç умĕнчех. Унăн кулли, лăпкă кулли темшĕн канăçсăр çыхланнă шухăша сӳтет, ситретет; унăн кулли, çутă кулли темшĕн кулас килтерет.

Чăнах та, Тимахви пичĕ çине кулă сăнарĕ ӳкрĕ, вăл вăрахăн карăнса илсе, çăмăллăн сывласа ячĕ.

— Çывăр, Тимахви. Мĕн сĕнксе ларан, вăхăт вăраха кайнă,—терĕ арăмĕ, упăшки чĕмсĕр шухăша кайнине сиссе.

— Да, Марье. Пурнăçа эпир иксĕмĕр начар пуçламан.

— Çывăр, ыран калаçăпăр.

Тимахви çунса вĕçне тухнă пирусне умĕнче ларакан кĕлсулчи çине пусса сӳнтерчĕ.

Кремль сехечĕ вуннă çапрĕ...

— Нивушлĕ вуннă,—хăвăрттăн пăхса илчĕ сехечĕ çине Тимахви.—Чăнах та вуннă... Эс çывăр, Марье. Ман хатĕрленмелле.

— Сан яланах çав ĕнтĕ,—терĕ те Марье, кăмăлсăррăн тепĕр май çаврăнса выртрĕ.

Мертлэ юлташăн ыран гарнизон конференцийĕнче Хĕрлĕ Çар историйĕ çинчен доклад тумалла. Доклад хатĕр мар, çывăриччен пăртакçă ĕçлеме тивет. Çĕнĕрен тивертнĕ пирусне вăл вăрăмăн туртса илчĕ те, хăвăрттăн-хăвăрттăн çырма пуçларĕ.

Кансӗрлемӗпӗр Мертлэ юлташа, хатӗрлентӗр. Вӑл ӗҫленӗ вӑхӑтра, савнӑ вулакансем, кӑмӑлӑр пулсан, унӑн пурнӑҫӗ ҫинчен пӗр пӗчӗк ҫеҫ калав ярса парӑпӑр.

Тимахви те командир пулса ҫуралман. Ача чухнехисене вӑл лайӑх астӑвать. Эпир астӑвасса вӑл вунулттӑраччӗ.

Вунултӑ ҫулхи ҫамрӑк. Вӗсен ялӗнчен пӗр ҫур ҫухрӑмра „Ҫӑкасар“ ятлӑ вӗтлӗх пурччӗ. Вӑл ҫул Тимахви ҫав вӗтлӗхри кукӑр-макӑр йывӑҫсене чылай шутласа ҫӳренӗ. Унӑн кӑкӑрӗ ҫинче чӗн тӑпсаллӑ сап-сарӑ пушаври пулнӑ, хыҫалта—хӗлӗхе ҫитичченех кантралатса явнӑ вӑрӑм пушши хулпуҫҫи урлӑ сулмаклӑн тӑсӑлса выртнӑ. Йӗри-тавра кахаллӑн чаркаланса утакан хӗрлӗ-хура ҫурӑмлӑ ӗнесем. Вӗсен ответлӑ хуралҫи — Анаткасри Мертлэ Мӗтрийӗн ывӑлӗ—Тимахви.

Кӑнтӑрла сулӑнаспа Шетмӗ енчен пӗр кас ҫумӑр килсе, ҫӗре ислетсе хӑварчӗ. Пӗлӗчӗ те хулӑм сийлех марччӗ пек, ҫапах чашлаттарсах ҫурӗ. Кӗрхи ҫанталӑкӑн йӑли ҫавӑ ӗнтӗ: пӗр йӗпене кайрӗ-тӗк вара, ҫанталӑк хӑйне хӑй ирӗлсе тӑрать.

Ҫумӑр хыҫҫӑн сивӗ ҫил тухса кайрӗ. Хӗвел чылай ҫӳлте-ха. Кӗтӗве яла антарма часах мар. Йытӑ вӗрнипе татӑлса тӑракан ҫитмӗл ҫичӗ саплӑклӑ кӑвак сӑхман ӑшӑ тытмасть, ҫамрӑк шӑмшака сивӗ витӗрех касать.

„Ӑшӑнасчӗ... Пӑртаккках ӑшӑнасчӗ“. Умра ларакан кивӗ тунката хӑйпӑкӗ хушшине пушаври чиксе ярса, кӑкласа пӑхрӗ Тимахви. Унтан тунката айне типӗрех ҫатрака ҫапписем хурса, вут чӗртсе ячӗ.

Тунката йӑсӑрланать. Унӑн кӑвак тӗтӗмӗ пӗтӗм „Ҫӑкасар“ вӗтлӗхне хупӑрласа илчӗ. Вут кутӗнче кукленсе ларнӑ ҫӗртех тӗлӗрсе кайрӗ Тимахви...

...Акӑ, кӗтӗве яла антарса Юртай Ваньки патӗнчен апат ҫисе тухнӑ хыҫҫӑн, килне таврӑннӑ пек. Ама-ҫури амӑшӗ вучах кутӗнче пӑтӑ пӗҫерсе тӑрать пек... Ҫаннине таврӑнӑ...—Атте вӗт ку,—тинкерсе пӑхса илчӗ вӑл, сӗтел хушшинче чавсаланса ларакан симӗс тумтирлӗ ҫын ҫине.

— Атте!.. Хӑҫан килнӗ эс?.. Ӑҫтан? Епле килтӗн?—хӑлаҫланса чупса пычӗ Тимук, ыталаса чуптӑвас шутпала.

— Мӗнле чортла ача ку?.. Акӑ сана аҫу!— тесе кӗске пӑшалӗпе хӑмсарчӗ ӑна симӗс тумтирлӗ ҫын.

Тимахви каялла чакрӗ. Сӗтел хушшинче ларакан тискер саслӑ ҫын—ҫӗрккаҫ амӑшӗпе кутник сакки ҫинче ыталанса ҫӗр каҫнӑ путсӗр салтак иккен. Тимахви ҫӳҫенсе кайрӗ. Ҫавӑнтах, хӑй те сисмерӗ, алӑри пушаври вирлӗн сулӑнса кайса, куштан салтак пуҫне сулмаклӑн шатлаттарчӗ.

— Пӗт эс! Пӗт, ҫӑхан! Аттен тӑшманӗ! Шурӑ шуйтан!..

Салтак, пӑрулама пикеннӗ ӗне пек ӗнӗрсе ярса, урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ.

— Эсӗ те пӗт!..—кӑшкӑрать Тимахви, нихӑҫан тытса курман сивӗ револьвере ярса илсе...

Амӑшӗ кӑвакарса кайса чӗтренӗ май, шӑлӗсене тискеррӗн йӗрсе, ҫуйӑхма пуҫларӗ.

— Сана эп парӑнап-и... вайттак!..

Унччен те пулмарӗ, вучахри вутпуҫҫи Тимахвине пырса та лекрӗ. Пӗҫерет. Кӑкӑра пӗҫерет. Аллипе кӑкӑрне ярса тытрӗ. Апла та пӗҫерет...

— Ху-у-у!—тесе сиксе тӑчӗ Тимахви. Сӑхманӑн кӑкӑр ҫинчи саплӑкӗ йӑсӑрланса ҫунать... Ама-ҫури амӑшӗ те ҫук, ҫурӑк пуҫлӑ шурӑ салтак та курӑнмасть...

Ҫӑкасар... Чаркаланса утакан ӗнесем.

— Да-а...—терӗ Тимахви,—е ку тӗлӗк чӑнах та пулнӑ пулсан, епле паттӑр пулнӑ пулӑттӑм...

Пушаврине вӑл тепӗр хут тытса пӑхрӗ.

— Сулмаклӑ ҫав... сулмаклӑ. Кунпала пӗрре хурсассӑн салтак ҫамкине...

Хӗвел ҫине пӑхса илчӗ Тимахви. Кӑнтӑрлаҥалла шӑвакан тачка хӑмӑр пӗлӗтсем витӗр хӗвелӗн ҫаврашки кӑшт анчах курӑнать. Анса лармашкӑн инҫе юлман. Тимахви, ӗне-

сене пухас шухăшпа, выльăхсем такăрлатнă сукмакпа вĕтлĕхе кĕрсе кайрĕ.

Ĕнесем пĕр уçланкăна пуçтарăнса тăнă. Киле каяс вăхăта вĕсем те сисеççĕ мĕн. Анчах пурте мар. „Ăçта Мирун Иванчăн ĕнисем?— çамки çине тытнă сулахай ывăçĕ айĕнчен уçланкă тавра пăхса илчĕ Тимахви.—Аляççан пушмакĕ те çук... Эрхип куккан..."

Вĕтлĕх сасартăк чăштăртатса кайрĕ. Тапăртатнă сасăсем илтĕне пуçларĕç. Мăш-маш! тутарса пуçĕсене çĕклерĕç уçланкăри ĕнесем. Мăш-маш!

— Мĕн вара унта?

Унччен те пулмарĕ, аçа та çиçĕмĕн чашкăрса, хÿрисене пăшал пек тăратнă ĕнесем уçланкăна сиксе тухрĕç. Ĕне выльăх çав тери хыпаланса чупнине Тимахви нихăçан та курманччĕ.

— Мĕн пулнă вара? Кашкăр мар-и?...

Тимахви, асăрханарах кăна, вĕтлĕхе тепĕр хут кĕрсе кайрĕ.

— Кил-ха, ачам... Кил-ха...

Çан-çурăм çÿçенсе илчĕ.

Таркăн мар-и?

— Ан хăра, ачам... ан хăра,—илтĕнет каллех вĕтлĕхрен.

„Кам мурĕ ку?"—ыйтать хăйĕнчен хăй Тимахви.

— Кам эс? Ăçта эс?...

Ун умне йӗпе шинель уртнӑ салтак тухса тӑчӗ. Вӑл хӑй те хӑранӑ пек пулнӑ. Шӑнса кӑвакарнӑ тутисем кӑшт чӗтревлӗн кулса ҫемҫелчӗҫ. Салтак Тимахвие алӑ пачӗ.

— Хӑрарӑн пулас?

— Хӑраман,—терӗ Тимахви.—Ӗнесем хӑрарӗҫ... Хӗрли-и эс, шурри-и?

— Сана хӑшӗ кирлӗ?

— Мана хама... Манӑн ама-ҫури аннене шурӑ офицерсем кирлӗ,—хӑвӑрттӑн каласа хучӗ Тимахви.

Салтак кулса ячӗ.

— Чудак иккен эсӗ. Сан аннӳне офицер кирлӗ, пире иксӗмӗре вӑл кирлӗ мар; офицерсем пирӗн тӑшман.

— Эсӗ апла пулсан... хӗрли.

— Шӑп ҫавӑ. Итле-ха, ачам.. Каласа парха, мӗнле сывлӑш халь ялта?

Тимахви йӗркипе каласа пама пуҫларӗ.

— Ялта шуррисен отрячӗ. Виҫҫӗмӗш кун вӗсем килни. Пӑлхатаҫҫӗ яла. Ӗнер 12 ҫынна Пӑвана ӑсатрӗҫ, те салтака, те вӗлерме. Аслисем пуян Мирун патӗнче. Хӗрлӗ ҫартисен килӗсене ухтарса ҫӳреҫҫӗ. Ӗнер пирӗн патӑрта та пулнӑ. Пӗр яка тумланнӑ куштанӗ, ахӑрнех офицер пулмалла, пакунсене ярӑм-ярӑм укапа тӗрленӗ, ҫав шыв шуйтанӗ ҫӗрӗпе алхасрӗ! Мана ир-ирех хӑваласа кӑларчӗҫ... атте килӗнчен...

Тимахвин куççулĕсем пиççе куштăрканă пит-çăмартийĕсем тăрăх йăрлатса анчĕç.

— Ан хурлан, ачам,— йăпатать салтак.— Аçу çук-и сан?..

— Атте хĕрлисем патĕнче. Катек учителĕ Крепковпа пĕрле кайрĕç. Анне тăван мар. Атте çыру та янă,— çак кунсенче киле кĕрсе тухатăп,— тет. Вăл çырăва çĕрккаç аннепе леш офицер темĕскер пăшăлтата-пăшăлтата вуларĕç... Пурпĕрех çамкинчен çапса çурап вăл эсреле!..

Тимахви хĕрсе кайрĕ. Çăварĕнчен мĕнле сăмахсем тухса кайнине те ĕретлĕн туйса юлмасть. Аллисене сулкала-сулкала калană май, халĕ çеç мăшкăл курнă паттăр пек тăрать вăл салтак умĕнче.

— Аван... лайăх хыпарсем. Тата мĕн пĕлетĕн?

— Урăх нимĕн те каламастăп. Илетĕр-и мана хăвăр патăра? Вара тата та калатăп,— терĕ Тимахви, хыпаланса.

Салтак йăвашшăн кулса ячĕ. Унтан Тимахвин хулпуççийĕ урлă аллине хурса, ачашшăн лăпкарĕ.

— Маттур ача! Кайăпăр пĕрле. Миçе çулта вара эс?

— Вунулттăра. Ман пĕвĕм пур, вăй та çитет. Иртнĕ акатуйĕнче те кĕрешнĕ эп. Раштавра вунçичче каятăп.

* * *

Кĕтĕве укăлчаран хуса кĕртсе ярсанах, Тимахви килнелле васкарĕ. Апат çиме каймарĕ. Юртай Ванькин пултăран яшкийĕ аса та килмест.

Васкамалла, часрах çаврăнса çитесчĕ. „Хăвăртрах пул", тесе хытарса янă ăна Çăкасара ларса юлнă хĕрлисен разведчикĕ.

Анчах мĕнле майпа пӳрте кĕрсе, çур çăкăра кутамкаласа тухас-ха. Иртнĕ каçхинехи çĕленсем тен паян та çавăнтах шăхăрса лараççĕ пуль.

Ял хушшинче нимĕнле сас-чĕвĕ те çук. Никам та урампа иртсе çӳремест. Хĕрарăмсем те ак куллен кунхи пек урам варрине ĕнисене хирĕç тухса илмеççĕ, — калитке алăкне кăшт уçаççĕ те, ĕнисем кĕрсе пĕтмесĕрех хупса лартма тăрăшаççĕ.

Тимахви хăйсен хапхи патне çитсе чарăнчĕ. Пӳртре нимĕн сас та çук. Анчах çенĕхре темĕскер măкăртатнă сасă илтĕнет.

„Епле кĕрес?.. Чӳречерен сиксе кĕрсен ĕнтĕ?.. чылайччен пăхса тăчĕ вăл.—Вара... Вара мĕн хăраса тăрап-ха?"—çенĕх алăкне яр уçса ячĕ. Урайĕнче такам харăлтатса çывăрать. Çăварĕнчи сурчăкĕсем сăмси шăтăкĕсенчен хăмпăланса тухаççĕ... тухаççĕ те, çав шăтăксенех каялла кĕрсе каяççĕ.

Çывăракан — ӳсĕр Мирун Иванч иккенне Тимахви палларĕ. Кăвакара пуçланă çӳçĕ ырхан сурăх çăмĕ евĕр тăлпаланса кайнă. Пу-

çĕ вĕçĕнче, çăм шлепкипе юнашарах, черкке тата çуррине яхăн эрехлĕ пулăштух кĕленчи йăваланса выртать. Çенĕхре те, пӳртре те урăх никам та çук.

Сунтăхри çăкăра кăларса илчĕ Тимахви. Хутаç кирлĕ. Мĕнпеле чăркас? Сентре çинчен кĕпе арки усăнса тăрать. Ана вăл туртса антарчĕ.—Ку мĕскер... мĕн?.. Аха-а-а-а,— терĕ Тимахви, кĕпе аркипе çакланса аннă вульвĕре курсан.

Чăрканă çăкăра хул хушшине хĕстерсессĕн, хăрăлтатса выртакан Мирун çине чылайччен тинкерсе пăхса тăчĕ Тимахви.—Перем-и ку шампа хырăма... Нивушлĕ сывă хăварас? Çук, тивес мар...—Тимахви темĕнле йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ те, чӳрече витĕр пахчана сиксе тухрĕ.

Никам та çук. Каç пĕлĕчĕ айĕпе вĕрекен сулхăн çил, шалçасен вĕçне çитичченех явăнса хăпарнă хăмла çулçисене япшарăн сĕртĕнсе, чаштăртаттарать. Улма йăранĕсем урлă йăпшăнса каçса, çав шалçасен хушшине кĕрсе кайрĕ Тимахви. Унтан каялла çаврăнса, хăйне пĕчĕкрен çитĕнтернĕ килçуртне курланкăсем витĕр хурлăхлăн пăхса илчĕ.

— Юрĕ... Сывă пул...—куçĕсене килĕ çинчен илсе малалла утма пуçларĕ.—Епле тухса кайнă, тен çаплипех каялла та килсе кĕрĕпха?

* * *

— Чылай кĕттертĕн-çке, ачам. Килмест пулĕ тесе сана,—тет „Çăкасар кайăкĕ“— салтак.

— Питĕ телейлĕ тухса килтĕм. Çапла пулласса шанманччĕ те,—çамки çинчи тарне çанни вĕçĕпе шăлса илчĕ Тимахви.—Тавай аплатăк пăртак çиер, пaçăрах выçнă терĕн вĕт эсĕ,—терĕ вăл, çăкăра салтака тыттарса.— Акă хама валли „кукăль“...

Салтак тĕлĕнсе çăварне карса пăрахрĕ:

— Ăçтан тупрăн эсĕ кăна?

— Хайхи офицерĕн. Сентре çине хурса хăварнă. Хăй...

Тимахви мĕн курнине йăлт каласа пачĕ.

— Пултармалла эсĕ. Малашнехи кун-çулу телейлĕ пултăр,—терĕ те салтак, çăкăрне чăмлама пикенчĕ.

* * *

Çул тăршшипех хăйĕн аллинчи винтовкипе паллаштарса пычĕ Тимахвине. Виç-тăват çухрăм пек утаççĕ те, канма ларaççĕ. Кану вăхăчĕ ахаль иртмест, яланах винтовкăпа.

Хăш тĕлтен, мĕнле тытса, мĕн тумаллине нимĕн те пĕлмест Тимахви.—Капла иккен ку, —терĕ кайран, тавçăрса илме пуçласан.— Меслечĕсене пĕлсе пĕтерейместĕн—хăрăк рычака та тăмасть иккен вăл...

— Çапла, çапла,—тет салтак.—Тăшман çамкинчен пĕтĕрĕнсе кĕрес пуля хăвна та ça-

вăнтах пĕтерсе хума пултарать. Унпалан çывăх паллашас пулать, машина вăл...

— Халь ăнкартăм ĕнтĕ, тăшмана чĕррĕнех ларăнас çук. Паçăр ăна пеме пĕлменни хупларĕ, хама тивĕ тесе хăрарăм, атту леш шампа хырăмне... Винтовка паратăр пуль-ха мана унта?..

— Паратпăр, паратпăр...

— Шинель те паратăр пуль?—тет Тимахви, юле янă сăхманăн шăтăклă аркийĕсем çине пăхса.

* * *

Вĕсем штаба çитсе кĕнĕ чухне тул çутăлма пуçларĕ. Вокзалра çич-сакăр вагона кӳлĕннĕ паровоз, суха туса ĕшеннĕ кĕсре евĕрлĕ, хăшăлтатса ларать.

— Тавай часрах... Максимов!—тет штаб дежурнăйĕ.—Эсĕ çеç юлнă... Пурте килсе пĕтрĕç.

— Эсĕ Максимов ятлă-им?

— Вара... вара...

Максимов дежурнăй умне пырса тăчĕ те, темĕскер шăппăн каларĕ. „Мĕн хăтланаççĕши кусем?“—чылайччен пăхса тăчĕ Тимахви. Максимовпа дежурнăй пĕр пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе кайсан нумаях та тăмарĕç, Тимахвине кăчăк туртса илчĕç.

— Эсĕ-им-ха вăл?.. Пăшал пеме пĕлетни?

— Пĕлетĕп... ăна та пĕлмесен ..

Ячĕ-хушамачĕсене ыйтса çырчĕ дежурнăй:

— Миçе çулта?

— 1902-мĕш çул раштав ыран тенĕ чух çуралнă... Мунчара.

Дежурнăй кулса ячĕ. Умĕнче тăракан телефон аппарачĕ шанкăртатса кайрĕ.—Çукха... çук. Кĕтĕр пăртак...

— Ну, тавай Мертлэ юлташ (хăйне капла чĕннине Тимахви чи пирвай илтрĕ), алă пус, —терĕ дежурнăй.—Эсĕ паянтан Хĕрлĕ Çарăн салтакĕ шутланатăн. Акă халех винтовка, шинель тата шлем паратпăр. Атă фронтра илетĕн.

— Фронтра?..—шухăшласа илчĕ Тимахви. Телефон шанкăртатать.

— Халех, халех!.. Пыраççĕ...

— Ну, тавайăр часрах! Поезд кĕтет. Ну, юлташ Мертлэ, паттăр пул! Тăшмана парăнма нихăçан та ан шухăшла,—терĕ те дежурнăй, иккĕшне те алă пачĕ.

Вĕсем çитсе ларнă-ларманах поезд тапранса кайрĕ. Ту-у-ут!—сасă Сăр улăхĕ тăрăх янтраса кайса, вăрман чăтлăхĕнче вĕçленсе çухалчĕ. Юлчĕ вокзал... хыçа тăрса юлчĕ.

II

Ытла аван кăлтăртатса чупакан поезд темшĕн сасартăк чарăнса ларчĕ. Вагон ăшĕ вĕлле хăвăлĕ евĕрлĕн ыйхăллă сассемпе сăрăлтатса кайрĕ.

— Мĕншĕн чарăнчĕ-ха поезд? Разъезд та мар, станци те мар. Мĕншĕн?..

— Юлташсем! — вагонсем витĕр янăрарĕ пĕр уçă сасă.—Тимĕр кĕпере салатнă. Каймашкăн çул çук...

— Кĕпере?

— Салатнă кĕпере!

— Салатнă кĕпере!

— Пăшал .. Пăшал!

— В ружье!—чĕтренерех янăрать командирăн сасси..

Вагон алăкĕсем уçăлса кайрĕç. Кĕпĕрленсе тухаççĕ. Хăшĕсем çӳлтенех сикеççĕ... Сикеççĕ те, тавраналла пăхса илеççĕ. Çырма тăрăх лăпчăнса саланма команда пулчĕ. Шăвăнаççĕ.

Выртас мар тенĕ лупашканах такăнса ӳкрĕ Тимахви. Виçĕмкун ирхине сырнă ури салтăнса кайнă ун. Çăпата кантри хăва тĕминчен çакланса, туртса ӳкернĕ ăна.

Пуçра темĕскер, тискер сасăллăн кĕрĕслетсе çĕре чĕтретрĕ. Тимахви çавăрăнса пăхрĕ те, халиччен шухăшра пулман япала курăнса кайрĕ. Вĕсене тавлăк çурă туртса килнĕ паровоз, кĕпер пекех саланса, çул айккине йăванса аннă. Вагонсем çунаççĕ.—Ман çăкăр вĕт унтах... Кĕпепе чĕркенĕ çăкăр...

— Ан пăрах винтовкăна... Вилсен те аллунтан ан яр!—тет çумĕнчех выртакан пĕр салтак.Тимахви винтовкине пăрахса, урине сырса ларнине курсассăн.

Винтовкине алла илсе, каллех, çĕр çумне лăпчăнчĕ Тимахви.

— Малалла, юлташсем!.. Малалла!—кăшкăрчĕ командир вăтам сасăпа.—Малалла! Сулахайран, сылтăмран... Пĕрерĕн, икшерĕн!..

— Хатĕрленĕр!

— Хатĕр!

Винтовкăсем кĕрĕслетме пуçларĕç. Пересçĕ. Малалла шăваççĕ.

— Мĕскере? Камсене перетпĕр?—малалла пăхса илчĕ Тимахви.

Никам та курăнмасть. Вăрман. Анчах „Çăкасар" пек вĕтĕ хунав йываçсем мар. Ку вăрманăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Çырма тăрăх таçта çитиччченех тăсăлаççĕ шултăра йываççем... Акă Тимахвисем вăрман патнелле сывхара пуçларĕç.

— Пулăшăр-ха... Пулăшăр!..—йăнăшса йăваланать пĕри. Ун çумне пырса лăпчăнчĕ Тимахви.

— Мĕскер пулнă?—Тимахви нимĕн тума аптраса юлчĕ. Çумра йăваланакана носилка çине хурса иккĕн йăтса кайрĕç.

„Командир пулчĕ-ши ку... мана илсе килнĕ салтак пулчĕ-ши?.. Ни атă памарĕç ĕнтĕ"...—салтăнса тарăхтарнă ури çине пăхса илчĕ Тимахви. Унтан вăрман хĕррине пулемет сĕтĕрсе тухакан икĕ çынна курсан каллех пусăрăнса выртрĕ.

— Аха-а-а, çавсем иккен!

Вăл шыв хĕррине йăпшăнарах кăна хыпаланса анчĕ те, тăшманăн пулемечĕ ҫине пеме пикенчĕ.

„Штыкпаччĕ! Штыкпаччĕ вĕсене тирсе пăрахма,—шухăшларĕ вăл.—Шыв анлă. Шыв урлă нимсĕрех каҫма ҫук. Пĕтнĕ пуҫ пĕтнех!"..

Пулеметчиксенчен пĕри, мăйĕнчен сĕрнĕ качака пек ҫухăрса йăванса кайрĕ. Пулемета ун ҫумĕнчи ярса илчĕ.

— Пурĕ пĕрех эсĕ манăн,—тарăхса перет Тимахви,—эсĕ манăн тăшман!...

Тăшман пулемечĕ ĕҫлеме пăрахрĕ.

— Юлташ командир. Сулахайри пулеметчиксене иккĕшне те персе пăрахрăм!—хăвăрттăн рапортларĕ Тимахви.

Командир ăна аллинчен хыттăн пăчăртаса, пуҫĕнчен шăлса илчĕ.

— Патруну пур-и?

— Чăнах та-ҫке...

Пушаннă патрунсен хутаҫҫине хывса пăрахса, ҫĕнĕ, тулли хутаҫ тăхăнса ячĕ.—Ăҫтаха вăл ҫав мана илсе килекенни?

— Кам ҫинчен калатăн эсĕ?

— Ятне манса кайрăм. Типшĕмрех питлĕччĕ вăл.

— Максимов-и?

— Вот ҫавă ҫав... шăп ҫавă. Ăҫта вăл, курăнмасть.

— Кунтах вăл, пирĕнпех,—терĕ командир.— Анчах унпек-кунпек ыйтусемпе ан чăрмантарăр-ха.

Тимахви командир патĕнчен пăранса кайрĕ. Винтовка ĕçлет... Ал-ура хĕрсе кайнă.

— Ак хайхи!...

Йăсăл-л-л... турĕ хул калакĕ. Пĕçерсе кайрĕ çан-çурăм. Авкаланса чĕтрерĕ ӳт-пӳ.

„Мĕн пулчĕ-ши ĕнтĕ? Мĕнле кисренчĕ-ши çĕр! Ăçта-ши командир?.. Максимов ăçта?.. Курса ĕлкĕрейрĕç-ши юлташсем?..“ Куçа тĕтре карса илчĕ. Йăванса кайнă Тимахвин антăравлă шухăшпа хупланнă пуçĕ суран ыратнине те, çанталăкăн сăн-сăпатне, нимĕн чухлĕ те чухласа юлмарĕ.

III

Янкăр уçă çанталăкăн çут-кăвак тĕслĕ арки чӳречерен сĕртĕнсе кĕрсе, йывăррăн сывласа выртаканăн пит-куçĕсене çупăрлать, ачашлать.

Тӳпе уярччĕ, çăлтăрсем чĕнтĕрленĕччĕ унăн маччине. Анчах сасартăк таçти кĕтесрен мăнтăркка хăмăр пĕлĕтсем йăсăрланса тухса, çутă тӳпене хупăрласа илчĕç. Çанталăк тĕксĕмленчĕ. Нăй-най-й... Ахлату... Шăл шатăртаттарни... Ĕнерхи, виçĕм кунхи евĕрлех лазарет пӳлĕмĕ йăнăшса тăрать. Нумая тăсăлĕ-ши ку?.. Хăçан пушанĕ лазарет?

— Каçхине ытла та аван çывăрнăччĕ эсĕ... Кĕçĕр ыйăху килмест-им?—терĕ Тимахвине койка умне пырса тăнă сестра.

— Темĕскер ыйхă вĕçсе кайрĕ-ха,—терĕ Тимахви, çамрăк хĕрĕн йăвашшăн вылянса тăракан куçĕсем çине пăхса.—Ыратаканĕ лăплanчĕ-ха ĕнтĕ самаях. Пуçăма йывăр шухăшсем пăтрататççĕ.

— Ытлашши йывăр шухăшсемпе ан хуçăл. Ыратнине нимле шухăш та пулăшма пултараймасть,—терĕ те сестра, ун патĕнчен пăрăнса кайрĕ.

— Мĕнле хĕр?.. Кăмăлĕ епле çепĕç унăн. Епле вăл йăпатса калаçать...

Ырă кăмăллă хĕр Тимахвине мĕн ăн килсе кĕнĕреннех тĕлĕнтерет. Вăл яланах ун çумĕнче. Епле йăлăхмасть... Анчах темшĕн халь нумаях калаçса тăмарĕ... ĕç пулчĕ пулас. „Манăн атте салтакрине ăçтан пĕлнĕ-ха вăл?"— тĕлĕнсе шухăшласа илчĕ Тимахви. Кăмăллă хĕр: „Санăн аçу та салтакра-им?"—тесе ыйтнăччĕ ĕнер.

Каллех ахлату. Авă пĕри ыйхипе аташса хăлаçланать, çуйăхать. Авă теприне носилкăпа йăтса тухса кайрĕç. Çăварне карнă вăл. Куçĕсем путса хупланнă.

„Аçта-ши манăн атте?—ашшĕ çинчен аса илмесĕр пĕр самант та ирттерес килмест Тимахвин. — Тен вăл та ман пекех лазаретра ахлатса выртать пулĕ. Е фронтра чăрсăр-

ран кӗрешет-тӗр? Атте!.. Атте! Е киле кӗрсе тухрӗ пулсассан вара"...

Амӑшӗпе офицерӑн тискер сӑнӗсем Тимахви умне тухса тӑчӗҫ. Акӑ унӑн амӑшӗ—пирус мӑкӑрлантарса ларакан офицер ҫумӗнче тачка шӑмшаккипе авкаланать: „Вула-ха, вула"...

— Интереснӑ.. Разведчик... Ухмах разведчик, разве арӑма шанма пулать.

— Йӑл-йӑл!—кулса илет амӑшӗ.—„Ҫак кунсенче киле кӗрсе тухатӑп... Пырсан та, каҫпа пыратӑп",—тенӗ сӑмахсене офицер чӗрӗп хырӑм айӗ евӗрлӗ катрашка тути хупӑлчийӗсене мӑкӑртаттарса вуласа тухрӗ.—Кӗҫӗр сыхласах пулать...

* * *

Ыратнине тӳсеймесӗр хытӑ сасӑпах хаярӑн йӑнӑшса выртатчӗ вӑл ӗнер. Кӗҫӗр сасси ун йӑвашланчӗ. Ҫапах йӑнӑшать.

— Нивушлӗ ҫав териех аманнӑ вӑл?—тӑрса ларса, йӑнӑшакан сын ҫине карӑнса пӑхрӗ Тимахви. Инҫех те мар. Ҫич-сакӑр койка урлӑ ҫеҫ. Кайса пӑхма тесе те шутларӗ Тимахви. Анчах тухтӑрсем курӗҫ, юрамасть.

Лӑпланчӗ йынӑшакан. Сывлани те илтӗнми пулчӗ ун.

Уҫӑлса кайнӑ кайри алӑкран паҫӑрхи хӗр кӗрсе пӑхрӗ те, каллех хӑвӑрттӑн чупса тухса кайрӗ.

Носилка. Каллех тухтăрсем. Каллех чунсăрсен кĕнеки çине виçĕ минут çеç каялла йăнăшса выртакан çыннăн ячĕ çырăнмалла.

Темшĕн сестран куçĕсем нӳрленнĕ. Шур тутăрпа куçĕсене шăлса нăшăклатать.

— Хурланатăн-и мĕн, Маня?—тесе ыйтрĕ куçлăхлă тухтăр.

— Çук... Шалкă пек...

— Димитрий Мертлев.

— Мĕнле Мертлев?—кăшкăрса сиксе тăчĕ Тимахви. Чĕлхе чĕтрет. Çан-çурăмĕ сивлеклĕн çунса тăрать.

— Эсĕ мар. Лăплан, Тимофей. Лăплан,— тесе тухтăр выртма хушать.

— Мĕнле Мертлев? Мĕншĕн эсир мана халиччен те каламастăр? Кăтартăр-ха, кăтартăр!

— Курмалли нимĕн те çук ĕнтĕ унта,— терĕ куççулĕ витĕр сестра.—Вăл санран та маларах килнĕччĕ кунта. Вăл санăн аçу пулнă...

Тимахви нимĕн те каламарĕ. Халиччен курман хăрушă хуйхă ăна ашшĕн пушанса юлнă койки çине çапса антарчĕ.

## IV

Вăхăтлăх килне каймалли хутне илсенех станцăна тухса утрĕ Тимахви. Юлашки кунсенче курса пулмарĕ Марьене... Алă парса уйăрласшăнччĕ унпала. Тав туса хăварасшăнччĕ.

Акă вăл урампа утать. Çĕмрĕк тăрăллă чул çуртсем кунта фронт хирĕлсе иртни çинчен Тимахвине тепĕр хут каласа параççĕ.

„Мĕн чухлĕ мул! Мĕн чухлĕ пурлăх ишĕлмерĕ пуль. Тен татах ишĕлĕç-ха? Тен каллех çĕр кисренĕ. Курасси—малашĕ. Атте, атте... Пĕр санăн куçна çеç нимĕнле кисренӳ те уçаймĕ“...

Урам хушши пĕр сасăсăр. Унта-кунта çеç çынсем ирткелесе çӳреççĕ. Салтаксем те пур вĕсен хушшинче. Акă пĕр салтакĕ Тимахви çумĕнченех сĕртĕнсе иртсе кайрĕ.

— Эй, чим-ха .. чим!.. Тăхта юлташ! Калаха эсĕ мана, станцăна ăçтан каймалла кунта?

— Станцăна-и? — Тимахви çине тинкерсе пăхса илчĕ салтак.—Вара эсĕ ăçта каясшăн?

— Киле каятăп эпĕ. Вунçичĕ эрне лазаретра выртрăм.

Салтак темĕскер хыттăнах калама пикенчĕ те, анчах калас сăмахĕ çавăнтах пырне ларчĕ.—Герой!—хаваслăн алă пачĕ Тимахвине.—Савнă тусăм!.. Тимофей!.. Мертлэ юлташ вĕт эсĕ?

— Максимов юлташ!.. Максимов?..

Тимахвин куçĕнчен ирĕксĕрех куççуль тумламĕсем шăрçаланса анчĕç. Çук, вăхăтлăха çеç вăл. Чĕрине хавшаклатма ирĕк памарĕ Тимахви.

— Кала-ха, Максимов... Хăш енĕ çĕнтерчĕ

çав кун,—эпě „вилнě“ кун? Нимěн те астă-ваймастăп.

— Хăш енě пулмалла. Паллах, çырма ку енě шěкěлчерě. Ун хыççăнах вара эпир иксě-мěр тунă разведка тăрăх сирěн ялти çăхан-сем патне „хăнана“ кайса килтěмěр. Тěлěн-мелле унта...

Тимахвисен ялěнчи шурă бандитсен йăх-тěпěсене çěмěрсе килни çинчен калать Мак-симов:—Çапла. Санăн аннӳпе офицер нӳхреп-ре пытаннă пулнă. Аçу пирки нимěн те пě-леймерěмěр. Вěсем нимěн те калаймарěç.

— Атте... Вăл манпа пěр лазаретрах вилсе выртрě...

— Ан тěлěнтер, Тимахви?!—хурлăхлăн пăхса илчě Максимов.

Тимахви ăна лазаретри пурнăçпа паллаш-тарчě. Марье çинчен те чылай каларě:—Ça-пах та атте вилмесěр те вăл мана пěлтер-мерě. Хăвна шеллерěм тет. Хам та пит на-чар выртнă çав. Суранăм тӳрленчě ěнтě. Ха-лě нимěн ыратнине те пěлместěп.

Чылайччен каласса тăнă хыççăн, Максимов хăй командирсен шкулěнче вěреннине пěл-терчě.

— Манăн та пырасчě унта, Максимов юл-таш. Вěренме илеççě пуль вěт?

— Илеççě. Характеристика хамах та çыр-са парăп.

* * *

Штаба çитсенех Тимахви ыйтăвĕпе Максимов начальник пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ.

Тĕпелте, чӑн кĕтĕсри сĕтел çинче пĕр çамрӑк хĕр машинкӑпа пичетлесе ларать. Тимахви ун çинелле чылайччен куçĕсене илмесĕр пăхса тăчĕ.—Нивушлĕ çав? Сăмси те çавӑнни манерлех...

— Мертлэ юлташ!—кăшкăрнă сасă илтĕнчĕ пӳлĕмрен.

— Мертлэ?! Тимофей, эсĕ-и?—сиксе тăчĕ çамрăк хĕр.

— Чим.. чим-ха. Сана эпĕ палларăм-ха та, Марье... Кайран калаçăпăр...

— Э-эх!—машинка умĕнче ларакан Марье хаваслăн кулкаласа юлчĕ.

* * *

— Эсĕ курсра пуласшăн апла-тăк?

— Ман шухăш çапла. Кил еннелле туртмасть.

Начальник шкулти условисем çинчен йĕркеллĕн ăнлантарса пачĕ.—Паян курсант. Тен, ыранах фронта тухса кайма та тĕл килĕ. Турткалану-тăву пулма пултараймасть вара ун чухне.

— Пĕлетĕп ăна. Хамăр тăшмансен тăшманĕ пулма кирек хăçан та хатĕр!

Тимахвин заявленийĕ çине „Граждан вăрçин салтакне, пролетариллĕ революцие чĕререн парăннă Тимофей Димитриевич Мерт-

лэ юлташа паян кунтан вӑтам комсоставӑн шкулне вӗренме илес“, тесе ҫырса хучӗ начальник.

## V

Доклад. Доклад ырана хатӗр. Шухӑшсем шурӑ хут ҫине чӗп-чӗррӗн тезисланса тӑчӗҫ.

— Сыхлар. Тимӗр карта ҫавӑрар,—терӗ Тимофей Димитриевич тезиссене вӗҫлесе.— Ун чухнехи.. хальхи... Ҫӗнӗ ҫӗршыв. Вӗрҫӗнӗ тӗнче. Кам пӑхса кам хапсӑнмӗ ҫак пуян та паттӑр ҫӗршывӑмӑра?!

Тимофей Димитриевич чӳрече витӗр урамалла карӑнса пӑхса илчӗ. Ҫанталӑк лӑпкӑ. Уяр. Фрунзе юлташ ячӗпе тӑракан хими комбиначӗн трубисем пӗлӗте улӑп пек кармашӑнса тӑраҫҫӗ.

„Мӗн чухлӗ вӑй! Тӗрек мӗн чул. Вут па, юн па ҫӑлса илнӗ ҫӗршыва нимӗнле тӑшмана та парас ҫук!“

— Мӗскер эсӗ, халӗ те выртман-и, Тима?..

— Халех выртатӑп. Халех, товарищ Маня.

— „Товарищу“ пултӑм пуль ҫав ӗнтӗ...

„Товарищ Тимахви“, тесе чӗнместӗнччӗ-и эс мана... лазаретра? Ҫапла пулас.

Чап-чакӑр электролампӑсем сӳнсе ларчӗҫ.

1934.

## САД ВАРРИНЧЕ

...Шăнкăрч йăви пек пĕчĕкçĕ пӳрт. Вăл пӳрт хăрах кас вĕçĕнчи укăлча çумĕнче ларнă. Унăн пĕртен-пĕр чӳрече çеç, вăл та пулин çĕмрĕк куçлăскер пулнă. Ăна çĕтĕк кипкепе тĕркелесе питĕрнĕ. Çапах тулти сивĕ çав çĕтĕк витĕр вăшăл-вашăлах вĕрсе тăнă. Чӳрече йĕри-тавраше шăнса пăрланнă.

Кил хуçи кăмака çумĕнчи пукан çинче çăпата шаккаса ларнă. Арăмĕ, пански çыхнă май, пилеш пĕкечеллĕ сăпка сиктернĕ. Сăпкара çамрăк ача вăйсăррăн ĕсĕкленĕ.

— Хăçан таврăнĕ-ши?—тенĕ çăпата тăваканĕ, хĕрлисен ретĕнчи ывăлне аса илсе.—Урăх нимĕнех те кирлĕ марччĕ. Хăй ыррăн-сыввăн таврăнсан, пурне те тума пулĕччĕ.

— Çаплаччĕ те,—тенĕ сăпка сиктерекенĕ,— çак пĕчĕк хĕрĕме те çĕнĕ пӳртре ӳстерĕттĕмĕр вара ун чухне...

Çав самантрах чӳречене тул енчен такам килсе шакканă.

— Мĕн? Кам унта?!—ыйтнă кил хуçи.

Шаккаканӗ хирӗҫ чӗнмен. Карта-хапха урлӑ хӑпӑл-хапӑл сиксе каҫнӑ сасӑсем илтӗннӗ. Пусма айӗнчен сиксе тухнӑ йытӑ туртса ҫурас пек харкашса вӗрме пуҫланӑ.

— Камсем? Мӗн шыраса ҫӳреҫҫӗ?

Пӳрт алӑкӗ уҫӑлнӑ. Арман хуҫи Ехрем шӑлне йӗрсе кӗрсе тӑнӑ. Унӑн хулӑм хупанкӑллӑ кассуй куҫӗсем сӗм ҫӗрлехи шӑши вучӗ пек мӗлтлетсе йӑлкӑшнӑ.

— Хуҫисем килтех иккен-ха,—тенӗ вӑл, пӑрланнӑ сухалне пӳрне вӗҫӗсемпе шӑлкаласа.

— Килтехчӗ-ха... Мӗн сӑмахпа ҫӳретӗр?

— Эпӗ хамшӑн мар-ха,—тенӗ Ехрем.—Манӑн хӑнасем пур. Ҫавсем курса калаҫасшӑн санпа...

Картишӗнче пӑшал пенӗ сас кӗрслетнӗ. Вӗрекен йытӑ хыттӑн нӑйкӑшнӑ... часах лӑпланнӑ.

— Мӗне пӗлтерет ку?!—алӑкне уҫса тулаллала пӑхнӑ кил хуҫи. Картишнех тухма хатӗрленнӗ вӑл, анчах ӑна хирӗҫ шуррисен офицерӗпе икӗ салтак лӑхӑл-лӑхӑл! кулса кӗрсе тӑнӑ.

— Эсӗ-и хуҫи? Пухвари-и эс?

— Ҫапла. Пухвари ятлӑ эпӗ.

— Йытту ытла усал санӑн...

— Усалли-мӗнӗ,—тенӗ Пухвари.—Ют ҫынсене вӗрет пулӗ ҫав.

— Ют ҫынсем-и вара эпир?.. Эпир-и? Хӗрлисем ют мар-и?

— Хĕрлисем...

Хăйне хăй чĕтренсе, шăл айĕпе кулса илнĕ Ехрем. Куçĕсене вылятнă. Çамкине картлантарнă.

— Хĕрлисем ют пулаймĕç,—тенĕ Ехрем.— Хăйĕн ывăлĕ те вĕсемпе мĕн хĕле кĕнĕренпех сĕтĕрĕнсе çӳрет вĕт... Вара ку хăй те, чăлах пулсан та, çав большевиксен майлă вĕт.

— Пĕлетпĕр ăна,—тенĕ офицер.—Ăçта ывăлу? Мĕн çырать? Час пĕтетпĕр тет-и?

— Ăна-кăна шарламасть,—тенĕ Пухвари.— Саламсем çырать. Часах таврăнаймастăп пулĕ-ха, тет.

— Тата мĕн çырать? Пар-ха кунта çырăвĕсене!? Ан суй!

— Суйма пĕлместĕп эпĕ. Вĕренмен. Суеçсен шкулне пĕтермен.

— Но-о!—ахăрса пăрахнă офицер.—Питĕ пысăк философ пулмалла эсĕ, старичок. Ха-ха-ха! Пар-ха çырăвĕсене...

— Пар-ха, карчăк,—тенĕ Пухвари, чĕтресе ларакан арăмĕ çине пăхса.—Ĕнер килнĕ çырăва илсе пар-ха.

Шуррисен офицерĕ, сĕтел умне чавсаланса, çырăва мăкăртатса вулама пуçланă. Унăн хăвăрттăн уçăла-уçăла хупăнакан тутисем çине Ехрем тĕрлĕ майлăн хиркеленсе пăхса тăнă. Çырура çапла çырнă пулнă:

„...Хăватлă Хĕрлĕ Çар пур фронтсенче те çĕнтерӳллĕ çитĕнӳсем туса пынине пĕлетĕн

ёнтӗ эсӗ, атте. Хаҫатсем тӑрӑх илткеленӗ пулӗ. Пирӗн дивизишӗн те паян кун пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ. Эрнене яхӑн кӗрешнӗ хыҫҫӑн хамӑрпа хирӗҫекен шуррисен икӗ дивизине тӗпӗ-йӗрӗпех ҫапса салатрӑмӑр. Темиҫе хутчен атака тумалла пулчӗ. Ху пӗлетӗн, вӑрҫӑ юн тӑкмасӑр пулмасть. Пирӗн хушӑран та чылай юлташсем пуҫ хучӗҫ. Тумлам юн юлмичченех хӑюллӑн чӑрсӑрланса кӗрешрӗҫӗ вӗсем... Хамӑршӑн, пулас чечеклӗ пурнӑҫшӑн нимӗн те шел мар. Сан вӑхӑтри еверлӗ мар, атте. Эсӗ те вӑрҫӑра пулнӑ. Кӗрешнӗ. Ӗмӗрлӗхе чӑлахланса юлнӑ. Камшӑн?... Улпутсемшӗн... Халӗ ҫеҫ вӗт-ха эсӗ ӑна ӑнланатӑн. Тӗрӗс ҫыратӑн эсӗ. Ял пуянӗсене хамӑр умра ташлаттарма пикентӗмӗр, Ехремрен те ҫирӗм ҫичӗ лав тырӑ туртса илсе, комбед урлӑ фронта ӑсатрӑмӑр, тетӗн. Питӗ те тӗрӗс. Ҫав юнӗҫенсене хӗрхенсе ан тӑрӑр. Шырӑр татах. Пытарнӑ тыррисене тупӑр. Кунта ӑсатӑр. Фронта хӑватлӑлатӑр. Тата калам ха: тыткӑна лекнӗ салтак ӗнентернӗ тӑрӑх, ҫав Ехремӗн аслӑ ывӑлӗ, леш, Хусанта вӗренекенни, пире хирӗҫ кӗрешекен шуррисен ӗретӗнче пулнӑ, тет. Пӗтнӗ пулӗ. Тыткӑна ҫакланнисен хушшинче курӑнмарӗ... Ҫӗнӗ кайӑк ҫуралнӑ тенине илтсен хӗпӗртерӗм. Салам савнӑ йӑмӑкӑма. Кунҫулӗ вӑрӑм пултӑр. Ыран ирех, тен кӗҫӗрех, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемшӗн кӗрешме тухса каятпӑр..."

—Каяççĕ!—тенĕ те офицер, лăх-лăх кулса илнĕ.—Айтăр... Эпир те каятпăр. Ну! Кама калатăп эпĕ?!

Малтанланса сисеймен те пулас Пухвари. Хăй çине тĕлленĕ револьвере асăрхасан çеç чухласа илнĕ вăл офицер сăмахĕ кама тивнине. Чухласа илнĕ те сехĕрленсе ӳкнĕ. Анчах хăй хăранине палăртман вăл. Нимĕн те чĕнмен.

— Эсĕ тата?! Мĕн, кăвакал пек, хутланса ларатăн? Ну! Кама калатăп эпĕ?!

Ача амăшне те туртса тăратнă офицер. Хăйсемпе пĕрлех пыма хушнă.

— Çапла ĕнтĕ, çапла-а-а!—лăхлатса кулса илнĕ Ехрем, ни вилĕ, ни чĕрĕ тăракан Пухвари çине пăхса.—Акă, арăмна та хупала пĕрлех илсе пыратăн ĕнтĕ. Арçынтан юлмалла мар çав вара... „Равноправи“ иккен те...

Çав самантрах Пухварин вунултă çулхи хĕрĕ кĕпе çунă çĕртрен таврăннă.

— Ăçта?—тенĕ вăл сасартăк.—Ăçта каятăр, атте?.. анне...

— Ку вĕсен хĕрĕ-им?—ыйтнă офицер Ехремрен.

— Вара, çавсен ĕнтĕ. Йăлтах çитĕнсе çитнĕ. Татса çиес çырла пек,—йĕкĕлтешсе ответленĕ Ехрем.

— Ĕ-ĕ-ĕ-ĕ!—тенĕ май, шăрт сухаллă тутисене чĕтрентернĕ офицер.—Апла пирĕнпех пыратăн?

— Аҫта? Мӗншӗн пымалла?!

— Пыратӑн! Ну! Кама калатӑп эпӗ?!

* * *

Ял ҫумӗпе юхса выртакан Пӑла шывӗ ял вӗҫӗнчен иртсенех кӑшт пӑрӑнса пӗкӗ пек кукӑр тӑвать. Ҫав кукӑра вырнаҫса ларнӑ пулнӑ пуян Ехремӗн виҫӗ чуллӑ шыв армане. Иртнӗ каҫхине ҫав армана ҫитсе чарӑннӑ мӗн хӑйсен ретне ҫӗнӗрен ҫынсем мобилизацилес шутпа ҫӳрекен шурӑ бандитсен штабӗ. Пӗлнӗ вӗсем... Ехрем каласа пӗлтернӗ. Пухвари пеккисене чи малтан алла илмесен, ку ялтан хӑвӑр рете пӗр ҫын та илсе каяймастӑр, тенӗ.

Акӑ, арман пӳрчӗ. Акӑ уҫӑлнӑ алӑк.

— Илсе килтӗмӗр, ваше благородие!—тенӗ офицер, сӗтел хушшинче каклишлӗн какӑрса ларакан ӳсӗр начальник умне каҫӑрӑлса.

— Юрать. Камсем кусем?—ыйтнӑ начальник.

— Вара, хайхи кӗтӳҫӗ ӗнтӗ ку, акӑ унӑн арӑмӗ, ватӑлсан та ача ҫуратма пӑрахмансқер, акӑ хӗрӗ тата,—йӑпӑлти чӗлхепе ӑнлантарнӑ арман хуҫи Ехрем.—Хайхи ку... пухура калаҫаканни.

— Аха,—тенӗ офицер. Хӑй ҫумӗнче каҫӑркаланса ларакан, сӑрлӑ питлӗ майри ҫине сӑмса тӑрӑххӑн пӑхса илнӗ вӑл. Майри ним

килĕшӳсĕр, пĕтĕм тăлпĕвĕпе чĕтренсе, ахăлтатса кулса янă:

— Çаксем-и сирĕн большевиксем?—тенĕ вăл, чыхăнса кайсах, çурăк сасăпа.—Çакăн тĕслĕ-и вĕсем?

— Ничево, тĕрлĕ пулаççĕ вĕсем.—тенĕ начальник. Пухварипе арăмне пуш кĕлете хупса лартма хушнă.

—Ачана хĕрхенĕр ĕнтĕ... пĕчĕкçĕ ачана,— йăлăннă Пухвари.—Арăма, хĕрĕме хĕрхенĕр. Хампала кирек мĕн тăвăр.

— Юрĕçке ĕнтĕ, юрĕ,—тенĕ Ехрем, йĕкĕлтевлĕн.—Ачу та хăвăн, арăму та. Пулăр пĕрлех. Кĕлетре ирĕк унта. Калаçăр революци çинчен. Хĕрӳ те пĕчченех ларас çук... çитĕнсе çитнĕ. Акă ăна хăйне уйрăм витене пĕр пӳлĕм парăпăр. Улăм сарăпăр... çемçе пулать вĕт. Ха-ха-ха!

... Вунсаккăрмĕш çул. Юлашки уйăх. Шартлама сивĕ декабрь. Пухварипе арăмĕ, пĕчĕкçĕ ачи—кĕлетре, сивĕ кĕлетре шăл шаккаса ларнă. Хăйсене мĕн пулассине нимĕнех те пĕлеймен-ха вĕсем.

Чылай сехетсем иртнĕ. Çанталăка каç сăнĕ çапнă. Хуралтă çиййсем, кăнтăрла кăштах йăшăнса сарăлнăскерсем, каçхи сивĕпе каллех пĕрĕнсе, шартлата-шартлата çурăлнă. Вăл сасăсем тыткăнра ларакансене ял патне хĕрлисен отрячĕ, тахçантанпах хавасланса кĕтнĕ отряд, пăшал персе çывхарнă пекех туйăннă.

* * *

Пухварипе арăмне илсе тухнă. Картиш варрине кăларса тăратнă. Допрос пуçланнă.

— Хăçантанпа большевик эсĕ?—ыйтнă начальник.

— Мĕнле большевик? Нимĕн те ăнланмастăп,—тенĕ Пухвари.—Пухура калаçаканни тетĕр эсир. Вара, калаçнă ĕнтĕ. Эпĕ çеç калаçман вĕт...

— Тата кам калаçнă?

— Пĕтĕм халăх калаçнă. Хĕрлĕ Çар ретне çынсем парса, çăкăр тата тумтир парса пулăшмалла, тенĕ. Эпир çĕнтеретпĕрех теекен паттăрсемшĕн урра кăшкăрсах алă çекленĕ. Вара, мĕн-ха уншăн? Алă çĕклемесĕр! Урра кăшкăрмасăр! Мĕншĕн çĕклес мар, мĕншĕн кăшкăрас мар—пире ирĕклĕ пурнăç туса паратпăр, теççĕ иккен те? Сăмахпа çеç каламаççĕ вĕт, ĕçпе кăтартаççĕ. Çĕрлĕ пултăмăр ак. Пире тата мĕн кирлĕ? Мĕншĕн алă çĕклес мар? Мĕншĕн урра...

— Молчать!—тенĕ, шăннипе сиксе чĕтрекен офицер.—Атя-ха кунта.

Пухварине вăл тарасаллă пусă умне çаватса пынă.

— Ларма пултаратăн!—тенĕ начальник, шывлă пусă вăлашки çине кăтартса.

— Вара, мĕнле-ха капла? Мĕншĕн лармалла-ха?

— Молчать! Хывăн хăвăртрах!

Пухварине йăлтах хывăнтарнă. Шывлă вăлашка çине кӳртсе лартнă. Пуян Ехрем те Пухвари умне кулкаласа пырса тăнă. Мăшкăласа ыйтнă:

— Шывĕ ытлашши сивĕ мар-и?— тенĕ вăл.— Чим-ха, кунта шыв сахалтарах пулас... Типсе юлма пултаратăн. Чим-ха, тепĕр витре ярса парам-ха.

— Кала! — тенĕ начальник. — Мĕншĕн эсĕ большевиксен майлă калаçатăн?

—Кала, атте! Кала!—тенĕ сасă янăраса илтĕннĕ витерен. — Кала! Мĕн чун тухиччен ех большевиксем майлă пулатăп, те! Пĕтерчĕç мана ку йытăсем... Юнĕçенсем. Ман çамрăк ĕмĕрĕме çухатрĕç... хĕрлĕхĕме туртса илчĕç...

Хĕр малалла калаçайман. Унăн çăварне хăйпе пĕрле витене хупăннă аскăн офицер хупланă.

Амăшĕ кăшкăрса макăрнă. Пурте вите еннелле çаврăнса пăхнă.

„Пурпĕрех пĕр вилĕм, мĕн пулсан та пулать“, шухăшланă Пухвари çав самантра. Чăрсăрланса сиксе тăнă вăл. Пусăран шыв кăларакан Ехрем карланкине пăвса пăчăртанă. Пĕççисенчен ярса илнĕ те, Ехреме пусă хăвăлĕ ăшне пуçхĕрлех чăмтарнă.

— Стой, подлец!—янăраса кайнă начальник сасси. Вăл, çак кĕтмен картинăна курнипе сехĕрленсе ӳкнĕскер, Пухварипе арăмне халех пĕве çине илсе тухма хушнă.

— Персе пăрахмалла-и, ваше благородие?— ыйтнă офицер, тин çеç витери хĕре вĕлерсе тухнăскер.

— Персе мар, пуля сая ямалла мар!—тенĕ начальник.—Урисене вакка чиксе лартмалла. Ку, арăмне, шалпартарах çăматă тăхăнтармалла... Унăн ăшне шыв тултармалла. Пĕлетĕн ĕнтĕ. Ăнланатăн?

— Как же, ăнланатăп, ваше благородие. Чать не первый раз...

Пухвари урисене чăркуççи таран шыв ăшне чиктерсе, хăйне пăр çине лартнă. Пĕчĕкçĕ ача амăшне те Пухвари умнех илсе пынă. Вăл тăхăннă шалпар кунчаллă çăматăсен ăшне пăрлă шыв тултарнă.

— Эсĕ çакăнтах тăратăн,—тенĕ офицер.— Упăшкуна сыхлатăн...

Çук. Ку сăмахсене кулса çеç каланă вăл.. мăшкăланă. Сыхлаканĕсем урăххисем пулнă: шуррисен икĕ салтакĕ.

Арăмĕ çине пăха-пăха илнĕ Пухвари. Арăмĕ—ун çине. Кăшкăрса макăрас килнĕ. Анчах саса та, куççулĕ те тухман. Тепĕр самантран

сиксе чӗтреме те пӑрахнӑ вӗсем. Хӑйсем ӑҫтине те пӗлми пулнӑ. Асӑнма хӑрушӑ вӑл куна... Тискер. Вунсаккӑрмӗш ҫул... Юлашки уйӑх... Шартлама сивӗ декабрь.

* * *

Ҫурҫӗр ҫитес умӗн, статуйӑсем пек хытса ларнӑ Пухварипе арӑмне сыхласа тӑракан салтаксен умне пӗр мӗлке ҫывхарнӑ. Шӑнса ӗнтӗркенӗ салтаксем сӑнаса та ӗлкӗреймен ӑна. Мӗлке, ҫитнӗ-ҫитменех, вӗсене пуҫӗсенчен чул ҫӗклекен ломпа ҫапа-ҫапа йӑвантарнӑ. Вӑл—арман мельникӗ Максим Емельянович пулнӑ. Вакӑри Пухварине ҫӗклесе илнӗ Максим.

—Тӑр-ха, тӑр!—тенӗ вӑл.—Пушкартӑм вӗсене... Хуралҫисене ҫеҫ мар—пӳртрисене те... ӳсӗррисене... Тӑр-ха! Пӗтнӗ вӗсем. Хӗрлисен отрячӗ пирӗн ял урлӑ ыран ир иртет. Тӑр... Вӗсене кӗтсе илме пӗтӗм ял хатӗрленет.

Ҫук. Пухвари чӗнсе те чӗнмен. Калаҫас вӑхӑт паҫӑрах иртнӗ унӑн. Арӑмӗ те ҫавах. Вӗсен кунҫулӗсем паҫӑрах пӑрланнӑ. Максим... Вӗсене вӑратма мельник Максим ытла та кая юлнӑ пулнӑ.

Пӳртре ача ӗсӗкленӗ сасӑ илтӗннӗ... Пухвари арӑмӗн пӗчӗкҫӗ хӗрачи. Ӑна мельник арӑмӗ ӗмкӗч хыптарнӑ...

* * *

— Çав хӗр ӗнтӗ вăл, ман çемьере ўснӗ хӗр, ӗнер сана çак садра хăйӗн вӗренўри çитӗнӗвӗсем çинчен каласа параканни,—тесе пӗтерчӗ хăйӗн калавне Максим Емельянович.—Кăçал институт пӗтерет. Врач пулатăп, тет.

Унтан мана Максим Емельянович—колхоз мельникӗ, вăлах сад хуралçи—çав хӗрӗн ашшӗпе амăшӗн тата аппăшӗн çак сад варринчи вилтăприсене кăтартрӗ. Вӗсене ем-ешӗл курăк пусса илнӗ.

1938.

## АЧА ÇУРАЛНĂ

Автансем çунат çапса аватаççĕ. Вăхăтлăха йăвасенче лăпланса ларнă чăхсем умлăн-хыçлăн кăт-кăтиклесе аслăк çинчен çăмарта туса анаççĕ. Амбар алăкĕ уçăлать. Тăхлачă кунтăк йăтса тухать. Чăхсене хăй умне япшаррăн йыхăрса илет вăл. Тырă пĕрчи сапса парать. Ытларах, тата ытларах çăмарта тума сунать.

...Пусă тараси чĕриклетет. Хĕр шыв ăсать. Унăн аллинче икĕ витре. Хăйĕн çиçсе тăракан куçĕсем пекех таса та тăрă çăл шывĕпе тулнă витресене пÿрте çĕклесе кĕрет. Сăмавар чĕртсе ярать. Ирхи апат хатĕрлет. Инке уйран уçлать. Унăн пĕчĕкçĕ ачи ыйхăран вăранать. Ачан питне çăваççĕ, шăлаççĕ, çемçе çăкăр çине усламçу сĕрсе параççĕ... Сăмавар вĕресе тухнă. Вăл сăрлă сĕтел çинче. Пурте сĕтел йĕри-тавра ларса тухнă. Кашнийĕн умĕнче уйрăм тарелка, уйрăм стакан. Умра— сĕтеклĕ апат-çимĕç. Апатланаççĕ. Ĕçе тухса кайма хыпаланаççĕ.

Çапла пуçланать Антон Антоныч пурăнакан колхозри колхозникĕн ĕçлĕ ирĕ.

Кашни кил хапхинчен ĕне тата мăнтăркка пăру—ăратлă йăхран пулнă пăру—чаркаланса утса тухать. Сакăр-тăхăр сурăх—çăмламас та самăр сурăхсем,—кĕрхи куян пек яка шăмшаклă путексем, пысăк хăлхаллă сыснасем... Тулли пурăнăç хаваслăхĕпе çиççе тăракан сăн-питлĕ хĕрсем, чипер инкесем кĕтӳ хăвалаççĕ. Калаçаççĕ вĕсем. Уй мăнтăрлăхĕ çинчен, камăн ĕни ытларах сĕт пани çинчен, кам кампа ăмăртса ытларах ĕçкунĕ тума ĕмĕтленни çинчен, çитес хĕлле валли миçе катка купăста, хăяр, кăмпа тăварласа нӳхрепе лартни çинчен, миçе чĕрес пыл пулни çинчен, миçе чĕрес панулми, çырла йӳçĕтсе хатĕрлени çинчен, Хĕрлĕ Çар ретне юрăхлă пулнă каччăсене мĕнле хăналани çинчен, вĕсем хăйсене килĕшӳллĕ тытни çинчен, Хасан кӳлли патĕнчи çапăçура пулнă паттăр патриотăн сăмахне ĕнер каçхине радио тăрăх итлени çинчен хавхаланса калаçаççĕ. Кĕтӳ уя тухать. Акă каçăр пуçлă лашасем—çĕртме сухи тума кайнисенчен ытлашши юлнисем: юпах тихасем, уйрăмăн çитерсе тăракан ăратлă айăрсем урамри çереме тĕпретсе пĕве патне анаççĕ. Шăварма илсе анать вĕсене вăрăм сăран атăллă конюх...

Çапла пуçланать Антон Антоныч пурăнакан колхозлă ялăн ĕçлĕ ирĕ.

Тул çутăлас умĕн çеç ăшă çумăр—çăкăр çумăрĕ çуса кайнă. Ешĕл тумлă лапсăркка йăмрасем, халĕ çеç пĕверен чăмтарса кăларнă пек, тумлам юхтарса лараççĕ. Çил çук. Çанталăк лăпкă. Çурт çумĕнчи улмуççиллĕ садра сарă кайăк юрă кĕвĕлет. „Çулçи çупать, улми ташлать“ тенĕ сăмахсемлĕ юрă асăма килет. Ытла та лайăх-çке, ытла та илемлĕ ирхи ялăн сăн-сăпачĕ.

...Антон Антоныч ялсовет канцелярине пырса кĕнĕ чухне секретарьпе иксĕмĕр калаçкаласа лараттăмăр. Чĕмеклĕ чĕнтĕр карнă чӳречесене чариех уçса янă. Пӳртре тулти пекех уçă.

—Сывлăхăрсем пур-и?—терĕ Антон Антоныч, чăнкă тăрăллă картусне сиктернĕ май, иксĕмĕре те алă парса.—Чăрмантартăм пулĕ, сирĕн сăмахăра пӳлсех çӳретĕп, каçарăр.

Секретарь кулса илчĕ:

—Мĕн чăрмавĕ пултăр вара?

Антон Антоныч та хура куçхаршиллĕ куçĕсене култарчĕ. Эпĕ ун çине, халиччен çакнашкал çын курман пек, тинкерсех пăхса ларатăп. Ăна секретарь хăй çумĕнчи авăнчăк хыçлă пукан çине вырăн пачĕ. Антонычăн сухалĕ те, куçхарши пекех, хура, ытлашши вăрăмах мар—вăхăтран-вăхăта кастарсах тăрать пулас ăна вăл, тикĕс те тирпейлĕ. Акă, кĕсъерен пĕчĕкçĕ шурă тутăр кăларчĕ, питкуçне шăлса илчĕ. Тирпейлĕскер, хăйне хăй

хисеплеме пĕлекенскер пулас ку,—шухăшларăм эпĕ. Вăл чăнласах та çапла, хăйне çеç мар, пĕтĕм çемьине, çынсене те, тумалли ĕçсене те юратса хисеплеме пĕлекенскер иккенне кайран пĕлтĕм вара, йăнăшмарăм.

— Чăрмавĕ ытла пысăках та мар манăн,— терĕ Антон Антоныч.—Ача çуралнă. Çавăн ятне çыртарса тухас терĕм... Ывăл.

— Саламлатăп сана, Антон Антоныч!—терĕ секретарь, ларнă вырăнтан сиксе тăнă май, ача ашшĕн аллине чăмăртаса.—Саккăрмĕш ывăл çуралнă. Телейлĕ пултăр!..

— Сакăр ача-и санăн?

— Çапла. Саккăрĕш те ывăл...

— Аплах мар пуль?—терĕм эпĕ, хăй çамрăк сăнлăран, ĕненмесĕр.

— Çапла пулмасăр,—терĕ Антон.

— Пурте сывă-и?

— Сывă пулмасăр. Манăн ывăлсем самолетпа вĕçсе пынă чухне ӳксессĕн те вилмеççĕ!— терĕ те Антон Антоныч, куçĕсене каллех савăнăçлăн култарчĕ.

Ӳксессĕн... Мĕнле-ха ӳксессĕн те вилмест? Тĕлĕнмелли кунта нимĕнех те çук мĕн. Унăн aслă ывăлĕ, 1910-мĕш çулта çуралнăскер, Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулнă. Çар службине тултарсан парашютистсен шкулне вĕренме кĕрсе юлнă.

— „За родину" ятлă кинокартинăна курман-им вара эсĕ?—терĕ сасартăк Антон Ан-

тоныч.—Унта авă, епле, сывлăшри десант. Шучĕ те çук вĕт. Лĕпĕшсем пек çĕр çине вĕçе-вĕçе анаççĕ... Анаççĕ те, çав самантрах алла винтовка тытса тăшмана хирĕç атакăна каяççĕ.

— Çапла çав, çапла... Курнă.

— Çавсенчен пĕри ĕнтĕ манăн ывăл. Нимĕнрен те хăрамасть. Вăл халĕ татах та маçтăрлантăм тесе çырса пĕлтерчĕ. Паллах, шанатăп. Украинăн çемçе çĕрĕ çине мар, авă, „Седов" пăрçĕмрен çÿренĕ çĕре, полюс тĕлне кайса пăр çине сиксессĕн те урине амантас çук.

Хавхалансах калаçать Антоныч—çăмăл шăмшаклă çăмăл çын. 1914-мĕш çулта, хăй вăрçа тухса каяс умĕн çуралса юлнă йĕкĕреш ывăлĕсем çинчен калать... вĕсемпе мухтанать. Аскăн вăрçă уйне вилме тесех ăсаннă пулнă вăл. Ачисемпе вĕсен амăшне çурма тăлăха тăратса хăварнă. Империализм вăрçинче виçĕ çул хушши кĕрешнĕ. Камсемшĕн? Ăна хăй те пĕлмен. Йăлăхтарса çитерне ăна вăрçă. Хăвăртрах хăтăлса киле таврăнасси килнĕ. Вăл ун пирки шухăшланă шухăшне кашни çырăвĕнче тенĕ пекех çырса пĕлтернĕ. Акă, вунçиччĕмĕш çулăн пуçламăшĕнче, окопра шăл шаккаса выртнă çĕрте, тимĕр кĕреçе çине хурса çырнă çырăвĕ халичченех упранса усранать-ха унăн. Унта вăл каланă: „...Тарса пыраймастăп. Вăй-халăм çук. Киле яччăр те-

се хам урана хамах персе амантас терём. Çук. Хам çине хам ала çёклеймерём. Сире аса илтём. Тен сывах та юлăп. Ытлашши ан пăшăрханăр. Революци çывхарни çинчен каласаççё кунта. Салтаксем пăлханаççё... Патшана та сирпётсе антармалла теççё. Ку çырăва, тархасшăн, шанчăклăрах çынсене çеç вулаттарăр...“

— Пулнă ĕнтĕ,—терĕ Антоныч, сухала шăлса.—Темĕскер те шухăшлаттарĕ вăл вăрçă тенĕскер. Хама хам пересшĕн пулнă пулать... Пурăнма ўркенесшĕн пулнă.

— Йĕкĕрешсем ăçта вара... вĕренеççĕ пуль?

— Тухнă вĕренсе,—терĕ Антоныч.—Пĕри ав, тракторист пулнă, иккĕмĕш çул ĕнтĕ МТС-ра ĕçлет. Тепри çар ретĕнче, асли пекех. Анчах сывлăшра вĕçмест вăл—шывра. Флотра... Лăпкă океанра ишет. Вĕренекеннисем те пур манăн. Кĕçĕннисем: пĕри акă, çитес çул вăтам шкул пĕтерет, тепри кĕçĕнрех-ха. Тата иккĕшĕ: пĕри пиллĕкре, тепри виççĕре—уншăн амăшĕ икĕ пин тенкĕ илнĕ (ку сăмахне Антон Антоныч пĕтĕм сăнсăпачĕпе савăнăçлăн çуталса каларĕ). Тепри ĕнтĕ акă, ĕнер каçхине çеç çуралчĕ, ăна пĕррере тесе шутлăпăр. Çыр. Иосиф ятлă хурăпăр. Ача ятне çырчĕ секретарь. Иосиф! Антон Антонычăн саккăрмĕш ывăлĕ Иосиф. Халех кайса çупăрлассăм килчĕ ăна... Алăра сиктерессĕм килчĕ.

— Халех сиктерме юрамасть-ха,—терӗ Антоныч, кулнӑ пек пулса.—Халӗ вӑл тин хупӑ ҫурса тухнӑ чӗпӗ пек ҫеҫ сывласа выртать. Куҫӗсем чӗрӗ ҫапах. Ҫурҫӗр ҫӑлтӑрӗ пек ялкӑшаҫҫӗ. Акӑ, килес ҫул килсе курӑн. Атя халь, вӑхӑту пулсан, уя кайӑпӑр. Унта паян манӑн бригада кӗтӳ хуса ярсанах ҫум ҫумлама тухнӑ...

— Бригадир-им эсӗ?

— Ҫиччӗмӗш ҫул. Колхоза кӗрсен икӗ кунтанах бригадир туса хучӗҫ. Начар должность мар вӗт.

Уя тухса кайнӑ чухне шкул тӗлӗнчен иртмелле пулчӗ. Ачасен ҫуллахи лагерӗ ҫак сад варринчи шкултах мӗн. Вӗсем тулта. Пурте килӗшӳллӗн йӗркеленнӗ, физкультура ирттереҫҫӗ. Антон Антоныч вӗсем ҫине чылайччен тӑра-тӑра пӑхса иртрӗ.

— Курса тӑранаймастӑп. Ытарма та ҫук вӗт. Пӑхнӑ ҫемӗн пӑхас килет вӗсем ҫине,—терӗ вӑл, ҫурма сасӑпа.—Мӗн каламалла, телейлӗн ҫитӗнеҫҫӗ. Акӑ, эпӗ пур, тӑватӑ ҫул ҫеҫ вӗренсе юлнӑ—ӑна та аран-аран.

Чӑнласах та аран-аран вӗренкеленӗ пулнӑ Антон Антоныч. Ун чухне хӑйсен ялӗнче шкул таврашӗ пулман. Тӑватӑ ҫухрӑмра ларакан вулӑс центрӗнчи шкула ирсеренех ҫуран юртнӑ вӑл. Юр-тӑманлӑ ҫанталӑксенче эрни-эрнипе каяймасӑр юлнӑ самантсем те пулнӑ.

— Мĕншĕн тесессĕн,—тет Антон Антоныч, —пĕррехинче манăн ăша аванах пĕçертрĕ вăл тăманлă çанталăк. Вăл куна хамăн ĕмĕрĕм иртиччен те манаймастăп. Иккĕмĕш класра çех вĕренеттĕм эпĕ ун чухне. Перемена вăхăтĕнче тантăшсемпе выляна хушăра коридорта ларакан бакри шыва тăкса ятăм. Çавăншăн мана йытă кăмăллă учитель, хăлха тымарĕсене тăпăлтарнисĕр пуçне, каça тăратса хăварчĕ. Тантăшсем паçăрах килĕсене ăсаннă. Сĕм пĕчченех класра ларатăп. Хăйă çутас умĕн шăпăрлă сторожиха эпĕ ларакан пӳлĕмĕн алăкне уçрĕ те: „Кай ĕнтĕ" тесе евитлерĕ. Тухрăм. Юр-тăман куç уçса пăхма çук айлăн-çийлĕн çавăрăнса вĕçтерет. Хам çапах, хăвăртрах киле çитсе ӳкесчĕ, тесе хыпаланса утатăп, чупнă çĕрте чупатăп. Уя тухсанах аташса, çул айккине пăрăнса кĕрсе кайнă пулнă. Çыран хĕррипе тан юр хӳсе тултарнă пĕр типĕ çырмана хам курăнми кĕрсе ӳкрĕм. Сехре хăпса тухрĕ. Сиксе чĕтретĕп. Çил... Сивĕ çил хаяррăн шăхăрса йĕрет. Юмахсенче илтнĕ „арçури" тата çавăнтах пыршă кумса çӳрекен „пирĕшти" те асăма килет. Тавраллăх сĕм тĕттĕм. Ниçта та нимĕн курăнмасть. Макăрсан та, çурлас пек кăшкăрсан та, паллах, никам та илтсе пулăшу пырса парас çук. Чылайччен шăл çыртса тапаçланнă хыççăн çыран хĕррине йăраланса тухрăм. Каялла уттартăм вара. Шкула

ҫитсе кӗтӗм. „Шуйттан чӗппи мар-и эсӗ, эсремет ҫури мар-и?“ тет хайхи шӑпӑрлӑ сторожиха. Мар,—тетӗп—„Мӗн ҫӗр хута найкӑшса ҫӳретӗн?“ тет. Эпӗ ӑна ӑнлантартӑм. Хайхи вӗт эпӗ, каҫа хӑварнӑ ача, терӗм. Вӑл вара мана шӑпӑр шӑтӑкне вырӑн парса ҫывратрӗ... Ҫапла пулнӑ ун чухнехи пурнӑҫ.

Юлашкинчен ассӑн сывласа илчӗ Антоныч. Хӑйсен ялӗнчи пӗр пуп ачипе вӗреннӗ пулнӑ вӑл. Пуп ачине тарҫӑсем шкула ирсерех лашапа леҫсе хӑварнӑ, лашапа пырса илнӗ. Антонычӑн лаша тавраш пулман. Ҫапах, ҫуранах ҫӳренӗ пулин те, вӗренесшӗн тӑрӑшнӑ мӗскӗн ҫамрӑк. Ялти шкула пӗтерне хыҫҫӑн, ашшӗ ӑна юлашки кӗрӗкне саклада хурса тупнӑ укҫапа Хусана илсе кайнӑ. Анчах, ӗҫ тухман. Пуп ачи семинарине кӗрсе юлнӑ. Антон Антоныч ялти шкултан пуринчен те лайӑх паллӑсемпе вӗренсе тухнӑ пулин те, уншӑн семинари алӑкӗ уҫӑлман.

— Ҫапла пулнӑ унчухнехи вӗрену правипирӗн пек ҫӑпаталлисемшӗн!—тет Антоныч.— Халӗ ӗнтӗ ҫав кунсем ылханса асӑнма ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Ывӑлсемшӗн, вӗсем ҫав тери телейлӗ тапхӑрта ҫитӗнмелле пулнишӗн хӗпӗртетӗп. Кирек ӑҫта та ҫул уҫӑ. Вӗренӗр, тӑрӑшса вӗренӗр, тетӗп. Кам пулас килет, ҫавӑ пулма пултаратӑн.

Мӑнаҫлансах калаҫать Антон Антоныч—ҫӑмӑл шӑмшаклӑ хулӑм сын... Бригадир... Са-

кăр ывăл ашшĕ. Ывăлĕсемпе мухтанать вăл. Ăна мухтанни те килĕшет пек туйăнать. Пĕри вĕçевçĕ... сывлăшра вĕçет. Тепри ишевçĕ... океанра ишет. Тепри... тепри тракторист... çĕр ĕçлет... çĕре çĕнетет.

— Çĕрĕ те хамăрăн, шывĕ те, сывлăшĕ те хамăр алăра!—тет Антон Антоныч.—Кăкăр тулли хаваслăхпа çĕкленсе, çав тӳпери тăрисемпе пĕрлех юрласа ярассăм килет...

Кăвак тӳпере чăнласах та тăрисем юрă шăрантараççĕ. Хĕвелĕ пĕçертет. Кĕрхи тулă калчи хăмăш пек хĕвĕнсе хумханать. Çум çумлакансем патне çывхартăмăр.

1938.

## ЮЛТАШ ЙĂМĂКĔ

Икĕ мăшăр куç, иккĕшĕ те хура харшиллĕскерсем, пĕр-пĕрин çине витĕр шăтарса кăларас пек çиçсе пăхрĕç. Самантлăха нимĕн те чĕнмерĕç. Çамрăклăх. Ах, ку çамрăклăхри юрату. Пĕтĕм калас сăмаха хăй аллине илет вĕт. Пĕтĕм калас сăмаха пыр тĕпне тăкăлтарса пӳлĕнтерет.

Звонок икĕ хут чанкăртатрĕ.

— Тут-у-у-ут!—йăхăравлăн кăшкăрса ячĕ паровоз.—Тут-у-у-ут!

Тепĕр хут çыпăçуллăн ыталарĕ Елена... Тимĕркке аллине хыттăн пăчăртарĕ. Каллех чĕмсĕрленчĕç вĕсем. Калас сăмахĕсене каллех калаймасăр тертленчĕç. Юлашкинчен аран-аран:

— Кайрăн-им?—тесе сăмах хушрĕ Тимĕркке.—Каятăн-им, Елена!?

Ытла та хăвăрттăн çитет мĕн уйрăлăвăн хисеплĕ сехечĕ. Çапах çăмăл мар мĕн вăл сехете кĕтсе илме.

— Тут-у-у-ут!.. Ту-у-у!.. Ту-у-ут!

Елена вагон ăшне кĕрсе ларнă-ларманах поезд вырăнтан тапранчĕ. Каптăкран кармашса пăхрĕ вăл. Тимĕркке тыттарнă чечек çыххипе шурă тутрине чылайччен саламлăн варкăштарса пычĕ.

— Телейлĕ çит, Елена! Çитсенех çыр çыру! Кил хăвăртрах!..

Кайрĕ Елена. Вăл ларнă поезд куçран çухалчĕ. Пассажирсене ăсатакансем хушшинче Тимĕркке тарăн шухăша кайса тăрса юлчĕ.

* * *

...Вĕсем пĕр-пĕринпе куçкĕретĕн тăрса паллашни нумаях та пулмасть, çулталăка яхăн çеç-ха. Манаймасть вăл куна Тимĕркке. Ăна вăл хальхи пек, паянхи пекех астăвать. Шăп çу кунĕсем. Пиçсе çитнĕ тĕштырăллă июлĕн юлашки кунĕсем. Ача чухне Тимĕркке ку кунсенче хĕмленсе пăхакан хĕвеллĕ уй тăрăх сахал мар пиçĕхсе çӳренĕ. Тырă вырман вăл. Çук. Кукăр çурла тытса хăйсене тивĕçекен тырă ани çинче ашшĕпе амăшĕ хушшине тăрайман. Мĕншĕн тесен, пĕри те çук пулнă унăн: ашшĕпе амăшĕ те, тырă ани те. Çамрăклах сĕм тăлăха юлса пурне те— хырăм выççине те тӳснĕ, çĕтĕк-çурăк çипуçне те. Юлашкинчен завода килсе кĕнĕ. Паян та çав заводрах ĕçлет Тимĕркке. Тимĕркке—ответлă ĕçре. Вăл—çĕршыв сыхлăхĕшĕн кирлĕрен те кирлĕ продукцисем кă-

ларса тăракан заводри комсомол комитечĕн секретарĕ. Пĕринче çапла, çулталăка яхăн каялла вăл, яланхи пекех, хăйĕн пӳлĕмĕнче ĕçлесе ларнă. Ĕçкунĕн сехечĕ çывхарса çитес умĕн ăна заводри техник Тимофеев телефон тăрăх шанкăртаттарса чĕнсе илнĕ.

— Мĕн? Итлетĕп!—тенĕ Тимĕркке.— Çукха... Паян ниçта каймаллиех те çук. Каçхине ахалех эп... Юрĕ. Пырăп.

Каç пулсанах Тимĕркке чĕннĕ çĕре, хăйĕн юлташĕ патне тухса утнă. Пырса кĕрсенех ăна техник Тимофеев хуларан килнĕ çĕнĕ çынпа паллаштарнă:

— Ку манăн йăмăк пулать... Елена.

Сиснĕ, хăнасем çине пăхса илнĕ. Йăмăкĕ килнĕ ятпа савăнăçлă вечер пекскер тунă иккен техник. Ытлашши палламан çынсемех те çук: директорăн заместителĕпе арăмĕ, цех пуçлăхĕ, комендант тата ытти те— пурте пĕр заводри юлташсемех. Тимĕрккене хăй çумнех вырăн панă техник. Тулли курка çĕкленĕ вăл:

— Пурин сывлăхĕшĕн те!—тенĕ.

— Йăмăкушăн?—тенĕ хăнасенчен пĕри.— Пулас инженершăн!

Татах та курка хыççăн курка çĕкленнĕ. Гитара танкăлтатнă. Балалайкăсем тĕнкĕлтетнĕ.

„Пулас инженер,—тесе шухăшланă Тимĕркке, пăхмассерен кулакан куçсемлĕ Еленăна сăнаса ларнă май.—Пиччĕшĕ техник. Хăй ин-

женер. Хăçан та пулин эпĕ те пулатăп-ши инженер?“

„Пулăн-ха, пулăн,—тенĕ ăна пĕр шухăш.— Саншăн та çул уçă. Тăрăшни çеç кирлĕ... вĕренӳ“.

Ĕçкĕлĕ-çикĕлĕ тулли кĕрекери хăнасем хушшинче ытлашшиех супĕлтетсе ларасси килмен Тимĕрккен. Тухса утма пикеннĕ вăл. Техник чарасшăн та пулнă. Тимĕркке ӳкĕте кĕмен. Вара ăна юлашки курка, çулкурки тыттарнă. Алă парса сывпуллашнă.

— Манăн та кăштах уçăлса кĕресчĕ,—тенĕ Елена, пиччĕшĕ çине пăхса.—Çамрăк хăнана ăсатса яма ирĕк паратăн-и?

— Пожалстă, пожалстă!—тенĕ техник.— Ырă ача вăл. Манăн чи лайăх юлташ.

— Кайччăрах вара. Уçăлса çӳретчĕр!—тесе шапăлтатнă хăнасем!— Çӳретчĕр. Çамрăкпа çамрăкăн сăмах килĕшет.

Тимĕркке чĕнмен. Кăштах вăтаннипе-и тен, Елена çине пăхнă май, куçĕсене култарса çеç вăл килĕшӳ палли панă. Тухса утнă вĕсем. Пӳртрисем çаплах калаçкаласа юлнă. Хăшĕсем, юрлам-ши юрлам мар-ши тенĕ пек çурма сасăпа ĕнĕрленĕ. Гитара танкăлтатнă. Балалайкăн хĕлĕхĕсем çинçен тĕнкĕлтетнĕ.

— Ытла васкарăр-çке эсир,—тенĕ Елена, пиччĕшĕ патĕнчен тухсанах чĕмсĕрленнĕ Тимĕркке çине куç айĕпе пăхса.—Килĕшмери мĕн?

— Уншăн мар. Пăчă унта,—тенĕ Тимĕркке. —Çуллахи каçсенче уçăрах сывлăшра çÿрес килет манăн.

— Эпĕ те çав сăмахах калаçшăнччĕ,—тенĕ Елена.—Начар мар кунта сирĕн. Кÿлĕ те пур теççĕ. Ăçтарах вăл.

— Инçе мар кунтан. Авă, завод картинчен тухсан, вăрман хĕрринче. Пиччÿпе иксĕмĕрĕн чи юратнă вырăн вара вăл. Пушă вăхăтсенче каçсеренех çав кÿлĕ хĕррине кайса калаçкаласа ларатпăр.

— Кĕçĕр çитеетпĕр-и унта?

— Акă, кунтах вăл.

Завод картинчен ерипен тухнă та вĕсем çавра кÿлĕ хĕрринчи сăрлă сакă çине пырса ларнă. Кÿлĕри шыв çине çутă уйăх мĕлкипе пĕрлех вĕсен мĕлкисем те икĕ мĕлке сĕмленсе ÿкнĕ. Каçĕ лăпкă, каçĕ çилсĕр пулнă. Кÿлĕри шыв çавра çатма çинчи пек пĕр чÿхенмесĕр тăнă. Тĕрлĕрен çепĕç сăмахсемлĕ ыйтусем парса ларнă Елена, Тимĕркке ответленĕ. Анчах хăй енчен вĕрçĕнĕрен пĕр сăмах хушса та калаçу пуçламан. Темшĕн, çан-çурăм сивлеклĕн чĕтренĕ унăн. Пулас инженер умĕнче кăштах именсе вăтаннă пек те пулнă. Пĕрре кÿлĕ çине, тепре Елена çине пăха-пăха илнĕ вăл. Еленăн хура куçхаршиллĕ, умри кÿлĕ пекех кăвак тĕслĕ те тăрă куçĕсем хупăнса уçăлмассерен хăйсене хăйсем кулса тăнă. Куçĕсем кулмассерен унăн

ахаль те çутă сăн-сăпачĕ Тимĕрккешĕн татах та çуталарах панăн туйăннă. „Килĕшÿллĕ сăнпуç... Пур енчен те лайăх çан-çурăмлă пике!—шухăшне пăлхатнă Тимĕркке.—Хамăр заводри маçтăрсем ăсталаса тунă пекех. Мĕн... Мĕнле сăмахран пуçлас?"

Сăмах тупаймасăр чылайччен пăркаланса ларнă вăл. Çавăнтах ăна тахçан илтнĕ кулăшла юмах аса килнĕ. Çапла, ĕлĕк-авал нихăçан хĕр çумне сĕртĕнсе курман пĕр именчĕк каччă тахшинсен пулăшăвĕпе вăйлă туй тусах авланнă, тет. Туй халăхĕ саланса пĕтсен иккĕшĕ çеç тăрса юлнă, тет те арăмĕпе калаçу пуçлама сăмах тупаймасăр тинкеленме пикеннĕ, тет, çак каччă. Юлашкинчен вара аран-аран сывлăш çавăрса янă, тет те: „Çав хĕреслĕ урамри пусă кутĕнчи çĕнĕ вăлашкана курнă-и, эсĕ?" тесе ыйту панă, тет. „Курнă. Çавăн умĕнченех иртсе килтĕмĕр вĕт",—тесе ответленĕ, тет, арăмĕ. „Çав вăлашкана эпĕ чавса тунă ĕнтĕ",—тенĕ тет каччă. „Апла эсĕ платник ĕçне те пултаратăн иккен"—тесе тĕлĕннĕ пек пулнă, тет, арăмĕ. „Ăна-кăна мар эп, çăпата тума та пĕлетĕп",—тесе мухтанса каланă, тет, каччă. Вара тинех вĕсен хушшинчи татти-сыпписĕр калаçу пуçланса кайнă, тет. Тĕрĕсрех каласан, çав именчĕк каччă пекех хăтланнă Тимĕркке те:

— Пирĕн заводăн паян тухнă хаçатне курнă-и эсир?—тесе ыйтнă вăл.

— Курнăçке, вуларăм,—тенĕ Елена.—Санăн сăнӳкерчĕкне те куртăм. Автобиографипе те паллашрăм... Акă, халĕ хăвăнпа та.

— Çапла,—тенĕ Тимĕркке.—Ача чухне кĕтӳçĕ çеç пулнă эп. Комсомол çитĕнтернĕ мана. Комсомол çын тунă. Завод... Çак завод вĕт манăн тăван аттепе анне... Çак завод тăван килçуртăм манăн.

— Эпĕ те çавнашкал,—тенĕ Елена.—Пичче те сирĕн евĕрлех. Виççĕмĕр те пĕр тăван пек эпир. Çапла вĕт, Тимĕр... Тимĕр тесе, эсĕ тесе чĕнсессĕн килĕшетĕр-и эсир?

Тимĕркке уççăн калаçма пуçланă. Çак самантран вĕсем „эсĕ" çине куçнă. Çак каç Елена чи малтанхи хут Тимĕркке аллине чăмăртанă. Мăйĕ урлах уртăнса тăракан пурçăн тутăр вĕçне вăл Тимĕркке çумне çепĕçĕн сĕртĕнтернĕ... кăштăртаттарса кăтăклантарнă. Çак каç Тимĕркке хăй пурнăçĕнче чи малтанхи хут хĕр тутине, хăй пекех хура харшăллă куçсемлĕ Еленăн тутине чуптунă. Вĕсем сăрлă сак çинче савăнса ларнине никамах та курман. Умра çавра кӳлĕ. Кӳлĕ шывĕ çинче çутă уйăх тата икĕ мĕлке, хăйсен мĕлкисем куç кĕски çинчи пек сĕмленсе тăнă.

Çапла пуçланнă паллашу. Çапла пулнă малтанхи курнăçу. Ытлашши нимĕнех те мар пек.

Тепĕр ирхине, ĕç сехечĕ пуçлансанах, хайхи Елена Тимĕркке ларакан пӳлĕме пырса

кĕнĕ. Тĕрлĕ тĕрĕллĕ пурçăн тутри ĕнер каçхинехиех, çан-çурăма кĕрнек кӳрекен кăвакарчăн пĕсехи тĕслĕ сарафанĕ йăм-йăм курăнса куçа çисĕ тăнă. Елена сăн-сăпачĕ ĕнерхинчен те çутăрах пек туйăнса, йывăç çинчи халь-халь татса илес панулми евĕрлĕ курăнса кăмăла хавхалантарнă. Пӳлĕме кĕнĕ-кĕменех çемçе диван çине вырăн панă ăна Тимĕркке.

— Чăрмантарса çӳренĕшĕн каçар-ха,—тенĕ Елена.—Ĕçпе килнĕччĕ эпĕ. Пĕр инкек пулнă вĕт манăн.

— Мĕнле инкек?—сехĕрленсе ӳкнĕ Тимĕркке.—Ĕнер каçхине-и?.. Манран уйрăлсан-и?

— Çук,—тенĕ Елена.—Килнĕ чухне. Поезд çинче. Çаратнă вĕт мана. Комсомол билетне кăларса илнĕ.

— Çавна кăна-и?

— Çавна çеç çав. Те укçа тесе илнĕ.

— Уншăн кăна ĕç сахал. Пысăк инкекех мар вăл,—тенĕ Тимĕркке.—Авă, пиччӳ те кунта килнĕ чухне паспортне çухатнăччĕ те. Мĕн вара? Илчĕ çĕнĕрен. Çыр заявлени. Акă, форми те пур манăн. Часах райкомол ларăвĕнче пăхса тухăпăр. Паллах, билетсĕр пурăнма аван мар.

Нумаях чăрмантарса тăман Елена. Тимĕркке умĕнче саламлăн тайăлнă та вăл, тавтунă, часах тухса утнă. Тепĕр эрнеренех Елена çĕнĕ билетлă комсомолка пулса тăнă. Çапла пулмалла та... Ытлашши нимĕнех те мар пек.

Вăхăт иртнĕçемĕн иртнĕ. Елена пăртакçă чирленĕ пек пулнă. Çавăншăнах, каникул иртсессĕн те вĕренме каймасăр юлнă.

— Ёлкĕрĕн-ха,—тенĕ Тимĕркке те.—Кăçаллăха пурăн çакăнтах.

— Хам та çапла шутлатăп,—тенĕ Елена.— Кичемех мар пурăнма кунта та.

Яланах пĕрле çӳренĕ вĕсем. Тĕрлĕ çынсене мар, заводри пур рабочисене те кĕме юраман цехсене те Елена Тимĕрккепе пĕрле нимĕн чăрмавсăрах явăçса кĕрсе кайнă. Пуриншĕн те паллă пулма юраман ыйтусемлĕ ларусенче те Елена Тимĕрккепе юнашарах нимĕн иккĕленмесĕр ларнă. Пурăна-киле рабочисем хушшинче „Тимĕркке авланать" текен хыпар та сарăлнă. Ку хыпар чăнахах иккенне Тимĕркке хăй те чĕреренех ĕненнĕ. Никамăн та мар, манăнах пулать Елена, тенĕ. Килĕшнĕ вĕсем. Елена хирĕçмен, пиччĕшĕ курорта кайнă пулнă.

— Эпĕ те каям-ха... Çуралнă çĕршыва кайса килем,—тенĕ Елена.—Чармастăн-и эсĕ, Тимĕр? Вара... Килсенех вара пирĕн пурăнăçсем ĕмĕрлĕхе çыхăнса тăрĕç. Килĕшетĕн-и, Тимĕр? Пĕр сăмахсăрах килĕшнĕ Тимĕркке. Акă, паян Еленăна ăсатрĕ вăл. Мĕн куçран çухаличченех Елена ларнă поезд çине пăхнă май, тарăн шухăша кайса юлчĕ: „Телейлĕн ситейĕ-ши... Каялла час çаврăнайĕ-ши... Хамăн та унпа пĕрлех ларса каймалла марчĕ-ши?"

Завод патне ҫывхарнӑ чухне Тимӗрккене шалти ӗҫсен сотрудникӗ хирӗҫ пулчӗ. Алӑ парса сывлӑх сунчӗ вӑл:

— Ӑҫта кайнӑччӗ капла?—тесе ыйтрӗ.

— Станцӑра пултӑм. Еленӑна, хам юлташӑн йӑмӑкне ӑсатрӑм.

— Начальник хӑй патне чӗнтернӗ сана. Атяха, канцелярине кӗрер.

Пырса кӗрсенех Тимӗрккене куҫлӑх лӑ начальник хӑй умне вырӑн панӑ:

— Ӑҫта, мӗн пулса ӗҫлетӗн эсӗ?

— Заводра. Комсомол комитечӗн секретарӗ.

— Аван, питӗ аван,—тенӗ начальник.—Комсомолецсем мӗнле ӗҫлеҫҫӗ санӑн? Оборона ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ-и?

— Питӗ активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Пурте тенӗ пек „Ворошиловский стрелок". Кашниннех „ГТО" значокӗсем пур. Халӗ тата самолетпа вӗҫме, парашютпа сикме вӗренес ӗҫпе ҫав тери интересленме пикентӗмӗр. Эпӗ хам та халӗ хам тӗллӗнех вӗҫекен пултӑм.

— Аван, питӗ аван,—тенӗ каллех начальник.—Ҫак ҫынна паллатӑн-и эсӗ?

— Паллатӑп,—тенӗ Тимӗркке, начальник аллинчи фото-ӳкерчӗк ҫине пӑхса.—Ман юлташ ку. Пирӗн заводри техник Тимофеев. Халӗ курортра вӑл... канать.

Начальник кӑштах кулнӑ пек пулнӑ:

— Курортра ҫав,—тенӗ вӑл.—Халӗ тытнӑ ӑна. „Канать". Акӑ, ҫакна та паллатӑн-и?

— Юлташ йăмăкĕ ку... Елена. Тин çеç... Акă халĕ çеç ăна ăсатса килетĕп.

— Вăл каялла çаврăнма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ,— каллех куларӑх, ăшă кăмăлпа каланă начальник.—Акă, тепĕр сехетренех Еленăна куçкĕретĕнех курма пултаратăн.

— Нимĕн те ăнланаймастăп. Мĕн каласшăн эсир, юлташ начальник.

Начальник пирус чĕртсе янă.

— Ăнлаймастăн çав, çап-çамрăк юлташăм!— тенĕ вăл.—Сан евĕрлĕ ăнланаймансем, сан евĕрлĕ тимсĕр те сисĕмсĕрскерсем сирĕн заводра сахал мар мĕн. Ĕçе чĕререн парăнса ĕçлекен техник мар, шпион пулнă вĕт Тимофеев. Ăна эсир паспортлă туса хăвăр завода йăва çаврăрма ирĕк панă. Йăмăкне, шпионкăна, çĕнĕ билет тыттарса комсомолка тунă. Хăвпа юнашарах самолет çине лартса вĕçтерсе çӳретнĕ эсĕ ăна. А вăл—фотограф. Акă, кур. Сирĕн завода тĕпĕ-йĕрĕпех ӳкерсе илнĕ вĕт. Пурне те пилĕк пӳрне пек пĕлсе тăнă. Ăнлантăн-и ĕнтĕ, юлташăм? Мĕн пулнă пулĕччĕ тетĕн çав çĕленсем тата кăштах ирĕкре явкаланса çӳренĕ пулсан...

Пĕтĕм çан-çурăмĕпе вĕриленсе, çавăнтах сивлеклĕн çӳçенсе илнĕ Тимĕркке. Ăнланнă вăл. Кăвак куçлă Еленăна çеç мар, хăйне хăй те курас килми пулнă унăн.

1937.

## К У З Ь М А  К У М

Пырсан-пырсан чарӑнса тӑрать те Кузьма, хавхаланса, йӗри-тавра пӑхса илет. Сухала чӗтретет вӑл. Шӑркана ларнӑ тулӑ пучахӗсене пӳрнисене чаркаласа шитлет.

—Тӗлӗнмелле!—терӗ Кузьма, хӑйпе пӗрлех паян иртенпе уй тӑрӑх ҫӳрекен, хӑй пекех ватӑ, хӑйпе пӗрлех колхозра пахалӑх комиссийӗн членӗ пулса ӗҫлекен Элекҫей мучи ҫине савӑнӑҫлӑн пӑхса. —Тӗлӗнмелле пулать кӑҫал тырӑ. Этем меслетсӗр тухӑҫлӑ пулать. Ҫӗраллӑ пӑт-и? Апла ҫеҫ мар. Икҫӗр пӑтран кая илместпӗрех гектартан.

—Ахальтен мар ӗнтӗ,—терӗ Элекҫей,—ахальтен мар ӗнтӗ пире пуян колхозра пурӑнакан колхозниксем тесе пӗтӗм республика ҫине чап сарнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ Пӗтӗм союзри Ялхуҫалӑх Выставкине кайма кандидата тӑратнӑ. Пӑх-ха! Мӗнчухлӗ мул кунта? Мӗнчухлӗ пурлӑх!

Умра тип-тикӗс те тем аслӑш уй. Унӑн тикӗслӗхӗ йӗри-тавра инҫене-инҫене тӑсӑлать.

Тулă пуçахĕ шăркара. Тулă уйĕ аслă юханшыв пек хумханса ларать. Стариксем хăйсен умри пурлăхĕпе киленсе уй тăрăх ерипенĕн утса çӳреççĕ. Кашни участок тĕлнех чăрăначарăна тăрса вĕсем, ĕçе пахалăх енчен, хăш бригада мĕнле ĕçлени çинчен тĕрĕслеççĕ.

Çĕр... Çакă хумханса ларакан кăпăшка, кĕрхи çăмран çĕлетнĕ сăхман пек, хура çĕр çине утăмласа пусмассерен, ĕлĕкхи, иртнĕ кунсен ĕмĕлки-кĕлетки куç умне сĕмленсе тухать.

Ку çĕр çине ĕлĕксенче Кузьмапа Элексей мучи евĕрлисем куç хӳрипе те пăхса илме пултарайман. Вĕсене тивĕçлĕ анасем—таçти мăян кукрисенче, çырма-çатра таврашĕсенче пулнă. Çулсеренех ял халăхĕ çĕре çĕнĕрен валеçнĕ. Ял сывăхĕнчи ырă анасене Хăрахкуç Тимкки евĕрлĕ çĕрме пуянсем хăйсен аллинчен вĕçертмен.

„Миçе çултанпа, ĕмĕртенпех хамăр алăра тытăнса тăнă эпир ку анасене!—тенĕ вĕсем, халăха хăйсен куçĕсенчен пăхтарса.— Çулсеренех кунта эпир миçешер лав тислĕк тăкса салататпăр. Çĕре лайăхлататпăр. Лашасăр, выльăх-чĕрлĕхсемсĕр кил хуçине парсан, çакă çĕре çемĕçтерме мар, çĕтĕлтерсе янине те туйса юлаймăн...“

Çĕр валеçекен халăх пуххине ертсе пыракан ял пуçлăхĕпе унăн „çуммисем“ те çĕре лайăхлатасшăн „хыпăнса çунакан“ кармаçă-

варсен кăмăлне ырланă. Ăçта ăшăрах кĕтес пуррине туйнă пуль çав пуçлăх. Асрах тытнă вăл: çĕр валеçсе пĕтнĕ хыççăн чыслă ĕçке ларасси—ял пуянĕн ĕмĕрхи йăли вĕт; чыслă ĕçкĕре чыслă хăна пуласси—ял пуçлăхĕн каçсерен те ирсерен кĕтсе тăнă ĕмĕчĕ пулнă.

Мĕскĕн кĕлмĕçĕн килĕ! Ĕмĕртенпе вĕтĕнсе хăршăлнă хуçалăх. Ĕмĕртенпе вăл çĕр çукшăн, çĕр сахаллишĕн тарăхнă... Ларса ĕсĕкленĕ вăхăтсем те пулман мар. Пурлă-çуклă çĕр лаптăкне те йĕркеллĕн ĕçлеме, çĕрĕн перекетлĕ сĕткенне ĕмсе илме унăн вăйхалĕ çук: вăл—лашасăр, машинăсăр. Вĕсемсĕр хресчен хуçалăхĕ алăсăр-урасăрпа пĕрех. Кирек мĕнчухлĕ тарăх. Çурмаран çурăлса каяс патне çит хăвна ху! Пур-пĕрех, ăçта пыратăн, унта—пуян шăлйĕрсе, куç умне тухса тăрать... Санăн ĕнсӳне хыпалать. Уя тухатăн, унта—армутипе мăян пусса илнĕ ана çийĕ, санăн килес çулхи пурнăçу кăçалхинчен те йывăртарах пулать иккенне ыйтмасăрах каласа парать. Пурăннă вĕт çапах. „Пурăнатпăр-ха“ тенĕ. Мĕскĕн уйрăм хуçалăх...

Уй тавра çаврăннă хыççăн стариксем кăштах канас тесе шут тытрĕç. Ултă çунатлă çилармане тĕлне тухакан участок вĕçĕнчи çерем лаптăкĕ çине майлашăнса ларчĕç. Хурлăхан тымарĕнчен ăсталаса тунă кукăр чăпăклă чĕлĕмне чĕртсе ячĕ те, Кузьма, темĕнле ассăн сывласа, çилармане çине пăхса илчĕ.

—Ан та кала!—терĕ Элекçей, сасартăк аса илнĕ пек пулнă май, Кузьма куçĕнчен пăхса.—Вăл çиларманĕ сана, Кузьма кум, ĕмĕрлĕхе асăнтарса хăварчĕ. Так ахаль вĕт... Так ахалех, урса кайнă анчăк пек тулларĕç.

—Мĕн тăвас тетĕн?—терĕ Кузьма.—Самани не кура, унчухнехи телейĕмĕр çавăн пек пулнă. Курас инкек хамăртан юлман.

Тен чăнласах та телейĕ çавăн пек пулнă пулĕ Кузьман. Тен чăнласах та курас инкекĕ хăйĕнчен юлман пуль. Ĕç... инкеклĕ ĕç чĕрĕк ĕмĕр каялла, ыраш пучахĕсем шăркана ларнă вăхăтра пулса иртнĕ. Ирхи апат тунă хыççăн, Кузьмапа арăмĕ уя тухса утнă пулнă. Хăйсене тивĕçлĕ анасене пăхса таврăннă чух çак çиларманĕ тĕлĕнчи ана урлă каçакан аслă çул хĕррине кăштах канма тесе ларнă. Арăмĕпе, яланхи пекех, чунтан-вартан калаçнă Кузьма. Тĕнче вăрçине юн тăкма тухса кайнă ял-йышсем çинчен хурлăхлăн аса илнĕ. Ыранхи куна мĕнле иртересси çинчен, çĕнĕ тырра тухиччен пурăнмаллăх ыйтма кам патне кивçене каясси çинчен тата ыттисем çинчен те сӳтсе-явнă. Нумай та вăхăт иртмен, чĕртнĕ чĕлĕм çунса пĕтсенех ура çине тăрса килелле каймалли çеç тăрса юлнă. Анчах, курас инкек ура айĕнчен сиксе тухнă тенĕ пек, ыраш ани ăшĕнчен Хăрахкуç Тимккипе ун патĕнче тарçăра пурăнакан Тарас чăштăртатса

тухнӑ. Иккӗшӗ те вӗсем, кӑмӑлӗсене чӑрсӑрлатса, Кузьмапа арӑмӗ ҫумне пырса тӑнӑ.

— Ӑҫта кайма тухнӑччӗ эсир?—ыйтнӑ Тимкка.

— Ниҫта та мар. Анасене пӑхса ҫӳрерӗмӗр.

— Мӗншӗн суеҫтеретӗн? – хулӑмрах сасӑ кӑларнӑ тарҫӑ Тарас. Вӑл ӳсӗртерех пулнӑ. Улачӑла кӗпи ҫаннисене вӑл хултӗп таранах тавӑрса янӑ.

— Кама та пулсан кӗтместӗр-и эсир?—тенӗ Тимкка, унталла та кунталла пӑхкаласа.

— Никама та,—тенӗ Кузьма, тарӑхма пуҫланӑ сасӑпа.—Мӗне кирлӗ-ши сире эпир?

— Пӗлмен пек калаҫать тата!—шӑлӗсене шатӑртаттарнӑ Тарас.

— Пӗлмест пулсан, пӗлтерӗпӗр,—тенӗ Тимкка, Тараса куҫ хӗссе.—Халех илсе тух-ха...

Ыраш ани ӑшӗнчен тулли михӗ ҫӗклесе тухнӑ та Тарас, тӗлӗнсе кайнӑран кӑвакарнӑ Кузьмапа арӑмӗ умне лартнӑ.

— Кам ӗҫӗ ку?—ыйтнӑ Хӑрахкуҫ.

— Кам ӗҫӗ ку, санӑн пулмасӑр!—кӑшкӑрнӑ Тарас, хулӑм хупанкӑллӑ куҫӗсене чарӑлтарса.

— Мӗн тӑвасшӑн мана эсир?

...Ӑнланса илнӗ Кузьма. Умра каркаланса тӑракан харам пырлӑ хуҫапа унӑн япӑлкка йытти мӗн тума хатӗрленнине сӑмахсемсӗрех пӗлме пулнӑ. Кузьма арӑмӗ, питне туттрипе хупӑрласа, макӑрса янӑ.

Мыскара пуҫланнӑ.

—Йышăн,—тенĕ Тимкка, йăпанчăклăн йăпшăнса.—Йышăнмасан ырă пулас çук. Ку ĕçшĕн закон алли мĕнле тыткаланине пĕлетĕн вĕт. Халех йышăнсан, ĕç шала кайиччен, тен каçарма та пултарăп. Ют ял çынни мар, хай как калас...

—Мĕн йышăнтарасшăн? Мĕн кĕтетĕр манран эсир?!—тенĕ Кузьма, тӳнтерле çаврăнса. —Çĕленсем!..

— Эпир çĕленсем-и?—ахăрса хашăлтатнă тарçă.—Кала, луччĕ! Кампа вăрларăн?.. Кама кĕтсе ларан?

Тарçăн кистен пек хытса кайнă шăнăрлă алли Кузьман карланкине ывăçласа пăчăрканă. Кузьма хирĕç чĕнеймен.

—Эсĕ киле кайма пултаратăн,—тенĕ Тимкка, макăрса супнă хĕрарăм çине анчăкла пăхса.

* * *

Хĕвел каç еннелле сулăннă.

«Армана çаратнă. Çаратаканĕ—Кузьма. Ăна тытса çиларман кĕлетне хупса лартнă»—теекен хыпар ял халăхĕ хушшинче çиçĕмле саланнă.

Ял куштанĕсем арман еннелле васканă. Вĕсенчен чылайĕшĕ «вăрă» мĕн тĕслине курасшăн мар—унăн пичĕ çине сурасшăн, чунĕ тухиччен хĕнесе юласшăн хыпаланнă.

Мĕншĕн? Çынна мĕн тунă Кузьма халиччен? Кама усал сăмах каласа хуçăлтарнă?

Мĕн сăлтавпа çиленсе вĕчĕ тытмалла-ха ун çине! Кузьма нумаях та пулмасть вăрçăран сывмарланса килнĕскер вĕт. Вăрçă хăрушлăхне пĕр пытармасăр, вăл вăрçă патшашăн, çĕрулпучĕсемшĕн иккенне халăх умĕнче каласа панăшăн-и? Тен çавăншăнах пуль? Çавăншăнах ял пуянĕсем Кузьма çине çисе ярас пек вĕчĕ тытаççĕ...

Нихăçан та хыпаланма хăнăхман ял пуçлăхĕ арман патне çитнĕ çĕре, урса кайнă йытăсем хăйсен ĕçне хăйсем шутланă пекех туса хунă. Кузьма çинче этем сăнĕ юлман. Çăварĕсене карса шăлйĕрсе тăракансем хушшинче вăл, какай муклашки пек, чĕп-чĕрĕ юн юхтарса выртнă.

— Ну штош!—тенĕ ял пуçлăхĕ, халăх çине пăхса.—Çын мулне ыйтмасăр илме юрамасть.

— Ыйтнă пулсан, пĕр сăмахсăрах 7—8 пăт кивçен панă пулăттăм,—тенĕ Тимкка.—Ют ял çынни мар вĕт...

Ял пуçлăхĕ «пăртакул» çырма ларнă.

«Ĕнер каçхине,—тесе çырнă вăл,—арман тыррине вăрласа, ыраш ани çине кăларса хунă. Вăрлаканĕ çак ял çынни—Кузьма. Вăл аслă çул хĕрринче лав кĕтсе ларнă. Лав çитсенех, вăрланă тырра килне илсе кайма шутланă. Тытнă ăна. Кăштах çапкаланă...»

Çапла пулнă Кузьман «хăйĕнчен юлман» инкекĕ! Юрать-ха, сывă юлнă.

—Ан та кала, Кузьма кум. Так ахаль вĕт... Так ахаль урса кайнă анчăк пек сана тулларĕç,—терĕ Элексçей мучи, çак арман патĕнче пулса иртнĕ мыскарана куç-кĕретĕн пăхса тăнăскер.

—Ан асăн ĕнтĕ,—терĕ Кузьма, иртнĕ кунсемшĕн шăл çыртса.—Вĕсен ĕмĕчĕсем пĕтнĕ пур-пĕрех. Шалçисем тулнă вăл йытăсен...

Стариксен сăмахĕсем татах нумай пулас. Калаçа-калаçах ура çине тăчĕç вĕсем, калаçа-калаçах ял еннелле утрĕç. Шăркана ларнă пучахсемлĕ тулă уйĕ юханшыв пек хумханса хыçа юлчĕ. Колхозăн ултă çунатлă çиларманĕ, пĕтĕм уйри мулшăн мухтанса пек, çиле хирĕç мăнаçлăн çаврăнса хăлаçланать.

1939.

## ДЕЛЬФИН ТЕСЕ...

Эрне каялла çума пуçланă çумăр иртнĕ каçхине çеç лăпланчĕ. Хĕвел ирĕккĕн хĕмленсе хĕртет. Ана чăрмантарса хупăрлакан пĕлĕтсем, çумăр пĕлĕчĕсем, çук халь. Тӳпе янкăр уçă. Тӳпе вĕçĕ-хĕррисĕр çуталса выртакан тинĕс шывĕ евĕрлех е лайăх йышши кантăк евĕрлĕ—кăн-кăвак тĕслĕ карăнса тăрать.

Канакансем тинĕс хĕррине тухса ларнă. Çумăр умĕн пуçланса халĕ те ахăрнă пек ыткăнса темиçе ĕмĕр хушши çăвăнакан чуллă çырана пыра-пыра çапăнакан хумсем çине тинкерсе пăхаççĕ вĕсем. Çав хаяр хумсем хушшинчех сывлăш çăтма тухнă дельфинсем курăна-курăна каяççĕ. Вĕсем курăнсанах вара канакансем кăшкăрашма, дельфин мĕнле чĕрчун иккенни çинчен пĕр-пĕринчен ыйтма, пĕрне-пĕри ăнлантарма пуçлаççĕ:

— Пăх-ха, мĕн пысăкĕш?

— Чăнах та, ĕне пекех!

— Эх, пăшал пулсанччĕ!

— Инçех те мар вĕт. Нимех те мар персе илме пулать!—тет снайпер, Ленинград çар округĕнчен кунта канма килнĕ красноармеец.

Калаçакансен çумне матрос та хутшăнать. Матрос, кăвакарма пуçланă çӳçлĕскер, çапах çап-çамрăк сăнлă, яланах савăнăçлă пит-куçлăскер, Хура тинĕс çинчен, тинĕсри тĕрлĕ йышши чĕрчунсем çинчен, итлекенсем пулсан—темиçе лекци вуласа пама хатĕр. Ăна итлемесен кама итлемелле. Дельфин çинчен вăл пĕлмесен кам пĕлмелле. Вăл вĕт хăйĕн çур ĕмĕрне çак тинĕсре ишекен карапсем çинче пурăнса ирттернĕ. Тинĕсе çав тери хăнăхса çитнĕ вăл, тинĕсе çав тери юрататъ. Кунта та, хăйĕн отпуск вăхăтне курортра ирттернĕ çĕрте те пуринчен ытларах тинĕс çинчен, яланах тинĕс çинчен калаçать. Ăна пурте пысăк тимлĕхпе итлесе лараççĕ. Калаçсан-калаçсан:

— Тен сире итлесе йăлăхтарчĕ те пулĕ,—тет вăл, пирускине чĕртнĕ май, куç айĕпе кăмăллăн кулса.

— Ытла та шывлă калаçатăп пулĕ. Мĕн тăвас тетĕн: сăмахсем шывлă тухнăшăн эпĕ айăплă мар—тинĕс. Авă епле хумханать вăл.

— Кала-ха? кала!—теççĕ ăна. Калама, вĕçĕмсĕр калаçма, ыйтаççĕ.

Матрос килĕшет.

* * *

Дельфин—кит евĕрлĕ чĕрĕ чун. Чĕпписене вăл вăлча тăкса мар, çаплах, кит пекех, сысна пекех çуратать, пĕр уйăх хушши чĕчĕ ĕмĕртет, кайран çиме вĕрентет. Тинĕсре мĕнле пулă пур, пĕрне те тиркесе тăмасть дельфин, пурне те çиет. Çавăнпа вăл самăр. Хăшпĕри 30 пăтлă пулать. 30 пăтран 20—25 пăт çу тухать. Унăн çăвĕ, кирлĕрен те кирлĕ çу, авиаци промышленноçне каять. Чĕп писене вăл, уйăх иртнĕ хыççăн чĕчĕ ĕмĕртмест пулин те, хăйĕнчен хăвармасть. Авă, кĕтӳпех çӳреççĕ вĕсем. Унта ĕнтĕ пĕр çемье. Ют çемьене хăйсемпе хутшăнтармаççĕ. Мĕншĕн çиеле тухаççĕ, тетĕр эсир. Сывлăш çăтма тухаççĕ. Ӳпкепе сывлаççĕ вĕсем. Çиеле тухса сывлăш çăтмасăр шыв айĕнче ик сехетрен ытла чăтса пурăнма пултараймаççĕ. Кунта, хĕрринче нумайăнах мар-ха вĕсем. Лерелле, калăпăр, пĕр 20 - 30 километр шалалла кайсассăн—ну-и нумай та вара! Пуринчен ытла каçхине кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе шăмпăлтатса çӳреççĕ. Хăшпĕр чухне куçа улталаççĕ: аякран пăхсан, çын ярăнса пыракан кимĕсем пек курăнаççĕ.

Йĕритавралла, итлесе ларакансем çинелле пăхса илчĕ те матрос тепĕр пируска чĕртсе ячĕ. Яланхи пекех лăпкăн, нимĕн хумханмасăр-тумасăр, малалла калама пуçларĕ:

Пĕррехинче çапла, Одессăран тиенĕ тавар-

семпе Батумине кайма тухнă пирĕн карап. Вахтăра эпĕ. Пĕлĕтлĕ каç. Йĕри-тавра пăхса илетĕп. Тинĕсĕн вĕçĕ те çук пек, хĕрри те. Çапах каç мĕнле кăна тĕттĕм пулсан та — куçран тĕксен те нимĕн курăнмасть тесе калань май, хăвна ху лăпланса пыма тинĕсçĕсемшĕн пĕр сăлтав та çук, закон та. Курас пулать. Эсĕ вахтăра тăратăн пулсан — пĕтĕм карап умĕнче ответлă: карапăн куçĕ эсĕ, карапăн ялавĕ. Çав самантра пĕтĕм карапăн ăраскалĕ санран килме пултарать.

Çапла. Пыратпăр. Малалла шăватпăр. Хутран-ситрен, капитан приказĕ тăрăх, прожектор ялкăшса çутатать. Вăл вăхăтра вара эп бинокле куç тĕлне тытатăп. Малалла пăхатăп. Сулахаялла, сылтăмалла, йĕри-тавра пăхса çаврăнатăп. Сасартăк сылтăм енче, карап пăлхатса хăварнă хумсем çинче, пĕр мĕлке, хураскер, сиккелесе илнине сăнарăм.

— Мĕн? — ыйтатăп хамран-хам. — Дельфин пуль.

— Çавă, — ответлетĕп.

Пăхатăп. Лайăххрах тинкерсе сăнатăп.

— Çук. Дельфин мар ку.

— Вăл мар, — ответлетĕп хама-хам. Кимĕ ку. Кимĕ! Мĕнле-ха кимĕ? Çак вăхăтра, çурçĕр тĕлĕнче, кунта вăл, тинĕс варринче мĕн шыраса, мĕн туса çӳретĕр?

Капитана пĕлтеретĕп. Чарăнчĕ карап. Карап хыçĕнче çакăнса пыракан шлюпкăна шыв

çине антаратпăр. Хăпăл-хапăл ун çине тăваттăн кĕрсе лартăмăр та леш кимĕ патне васкатпăр. Кимĕ. Кимĕ çинче икĕ çын. Вĕсене эпир прожектор çутипе лайăхах куратпăр. Канлĕн лармаççĕ. Ăнланмалла мар: темĕскер тапаçланаççĕ, хăлаçланаççĕ. Çывхартăмăр.

— Пулăшăр-ха? Тархасшăн мана çак усалтан хăтарăр!—тет кимĕ çинчи хĕрарăм çинçе те асаплă сасăпа. Çумĕнчи арçыннине çапать хăй, мăйĕнчен пăвать, шăлпа кăшлама хăтланать.

— Мĕн амакĕ пулнă сире? Камсем эсир?

Хĕрарăм ляпланчĕ. Тапаçланса арпашнă çӳç-пуçне юсама пуçларĕ. Мĕскĕн сăн-сăпатлăн тинкерсе пăхать пирĕн çине. Арçынни те пăхать. Вăл кăштах кулкалам пек те тăвать.

— Камсем эсир?

— Канакансем,—тет хĕрарăм.—Кунта, курортра эпир. Ярăнма тесе тухрăмăр.

— Çакăнта ярăнаççĕ-и вара. Çыранран ытла та инçе килнĕçке?

Вара çав,— тет хĕрарăм.—Хам ухмах пултăм эп. Акă, усал, мана кунта илĕртсе килчĕ те, вăйпах пусмăрлама пуçларĕ.

—Пурин çинчен те ан кала-ха тархасшăн, — сăмах хушрĕ арçынĕ.—Юлташсене чарса ан тăр. Килĕшĕпĕр ĕнтĕ. Тивместĕп. Каçар.

Хĕмрарăмран каçару ыйтакан арçын пирĕн çине йăвашшăн пăхса куçĕсене култарчĕ.

—Çук. Килĕшместĕп ,—терĕ хĕрарăм куç-

çулĕпе ача пек макăрса.—Мана улталаса, манăн хĕрлĕхе вăйпа туртса илме шут тытнă усала каçарма пултараймастăп. Илĕр ăна, матрос юлташсем! Çитес пристане антарса хăварăр. Тем пекех тархаслатăп сире. Илĕр ăна хăвăрпа пĕрле.

Хĕрарăм сăмахне итлерĕмĕр. Хăйне те тинĕсваррине пĕчченçи хăварма килĕшмерĕмĕр. Илтĕмĕр хамăрпа пĕрле. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр шухăшлăскерсем, леш енне тарса каçма хатĕрленнĕ пĕчĕк чунлă пысăк шпионсем иккенне часах пĕлтĕмĕр,—тесе пĕтерчĕ ватă матрос хăйĕн калавне.

Пурте уççăн сывласа ячĕç. Матрос çине тулли юратупа, ăшă кăмăлпа пăхса илчĕç.

* * *

Тинĕс енчен нӳрĕк çил вĕрет. Хумсем вăйлăнрах шавлама пуçларĕç. Çанталăк каллех çумăр пама хатĕрленет.

Апельсин пахчине вырнаçнă столовăйăн террасси çине тухсэ тăнă повар помощникĕ, яланах кăмăллăн кулакан куçсемлĕ Кулине, канакансен апатланас вăхăчĕ çитнине пĕлтерчĕ.

1938.

## КОНЮХ

Вăл пурăнакан çĕнĕ пӳртĕн чӳречисем çинче хĕлĕн-çăвĕн чечек курăкĕсем ешĕреççĕ. Стена çумĕнче, пысăк тĕкĕрсĕр пуçне, тĕрлĕрен сăнӳкерчĕкĕсем çакăнса тăраççĕ: граждан вăрçи вăхăтĕнчи сăнсем, халь çеç çемьипе пĕрле ӳкернĕ сăнсем тата ыт. те. Чи курăнакан вырăнта,—аслă çулпуçăн сăнĕ. Аслă Сталин сăнĕпе юнашарах ССР Союзĕн картти çакăнса тăрать. Ун çине кашни пăхмассеренех:

— Хĕвеллĕ çĕршывăм, телейлĕ çĕршывăм, ирĕклĕ те аслă çĕршывăм!—тесе илет Кавăрле мучи.

Суйлава хатĕрленнĕ май вăл, тăван çĕршывăн карттипе нихçанхинчен те ытларах интересленет. Пăхать. Акă Мускав—çĕршывăн чĕри. Акă Ленинград—Аслă Октябрĕн вучахĕ. Киев, Минск, Ашхабад, Сталинабад, Алма-Ата... Пурте хамăрăн хуласем. Чечеклĕ çĕршывăн чечеклĕ хулисем.

Акă, Курск, Воронеж, Ростов...

Дон-çи Ростов тĕлне çитсен чылайччен чарăнса тăрать Кавăрле мучи. Тарăн шухăша каять... Манми хула. Вăл хулари нихăçан асран кайми кунсем халĕ те куç умĕнчех.

Вунтăххăрмĕш çул. Сентябрь. Кавăрле мучи—ялта. Вăл чухăнсен комитетĕнче ĕçлет. Вăл патша вăрçинче пулса курнăскер, салтак пурнăçĕ мĕнле пулнине, вĕсем камсемшĕн вăрçса юн тăкнине ял-йышсене ăнлантарса парать.

— Юнлă Николай мар, Керенский те мар,— пире большевиксем ирĕке кăларчĕç!—тет Кавăрле мучи.—Большевиксем çеç хресченсене çĕрлĕ турĕç. Большевиксем çеç лăпкă саманашăн кĕрешеççĕ. Акă, пирĕн çамрăк çĕршыва пур енчен те тăшмансем тапăнаççĕ. Çавсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрмесĕр нихăçан та лăпкă самана, кирлĕ пурнăç пулмасть.

Çавăнтах Кавăрле мучи хăйĕн ывăлĕн, Хĕрлĕ Çар ретĕнчи Урттемĕн çыруне вуласа парать.

— Акă, итлĕр,—тет вăл,—мĕн çырать манăн Урттем: „...Буденный утлă çарĕпе пĕрлешсеултă кун таултă каç вăрçнă хыççăн Воронеж хулине Мамонтов генерал çарĕнчен пĕтĕмĕшпех тасатрăмăр. Халĕ унăн хавшаса юлнă çарĕ Шкуро бандит çарĕпе хутшăнса пире хирĕç кĕрешме хатĕрленет, теççĕ. Ĕнен атте. Эпир çав тăшмансене, халиччен пе-

кех, мёнпур хаярлăхпа çĕмĕрсе тăкатпăр. Эпĕ халь кăштах аманнă, кунта, Воронеж хулинчи больницăра выртатăп. Час сывалса каллех строя тăрасса шанатăп. Ан пăшăрхан, атте. Сывалатăп. Часах манăн унта пĕчĕкки çуралать пулĕ ĕнтĕ, пĕлтерĕр...»

Ну, малалла çемье ыйтăвĕсем, тенĕ Кавăрле мучи. Малаллине вуламасан та юрĕ. Мĕн вăй çитнĕ таран пулăшар хамăрăн Хĕрлĕ Çара! Мĕнпур вăя, кирлĕ пулсан, пурнăçăмăра та памашкăн хатĕр тăрар!

Сахал мар тырă тата ытти çимĕçсем Хĕрлĕ Çара валли панă. Ялти пурнăçа чухăнсем хăйсен аллине илнĕ. Кулаксен пытарнă тыррисене тупса тие-тие тухнă. Ялти класс кĕрешĕвĕ нихçанхинчен те ытларах çивĕчленсе кайнă.

Урттем çинчен нумай шухăшланă Кавăрле мучи. Шухăшланă шухăшне ун пурнăçа кĕртес килнĕ. Юлашкинчен вăл: «кайса килем-ха, халĕ больницăра чух хăйне курса та пулин, ывăл ачи çуралнине пĕлтерсе те пулин килем», тенĕ.

Пĕчĕкçĕ Якку сăпкара канлĕн лăпланса выртнă. Унăн илемлĕ сăнĕ пĕтĕм пӳрте çутатнăн туйăннă.

Кавăрле мучи Якку çине чылайччен пăхса тăнă. Пăхса тăнă-тăнă та каланă:

— Канлĕн çывăр, чунăм. Аçу санран çирĕм çул аслă, асласу—хĕрĕх çул. Çывăр. Асласу

аҫу патне, сан ятупа пысӑк салам калама каять.

* * *

Воронеж хулинче лӑпкӑ пурнӑҫ тӑнӑ. Ӑҫта пӑхнӑ унта хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшнӗ. Ӑҫта пӑхнӑ унта: «Хӗрлӗ Ҫар ретӗнчи паттӑрсене хӗрӳллӗ салам!», «Сывӑ пултӑр ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ туса пыракан Хӗрлӗ Ҫар!», «Сывӑ пултӑр Ленин!» теекен лозунгсем куҫсене илӗртнӗ.

Ку хулара Кавӑрле мучи вӑхӑтлӑха ҫеҫ чарӑнса тӑнӑ. Урттеме больницӑра тупайман. Урттем стройра, тесе пӗлтернӗ ӑна. Ҫапах ывӑлӑма курмалла манӑн тесе, вӑл хулари ревкомран путевка илнӗ. Часах Ростов еннелле ҫул тытнӑ.

* * *

Дон шывӗ катаранах курӑнса, хумлӑн-хумлӑн явӑнса юхса выртнӑ. Сентябрь ҫилӗ тапхӑр-тапхӑр хаяррӑн шӑхӑрнӑ, тапхӑр-тапхӑр лӑпланнӑ. Тӳпере мӑнтӑркка пӗлӗтсем умлӑн-хыҫлӑн йӑсӑрланса хӗвелтухӑҫӗ еннелле васкавлӑн шӑвӑннӑ. Утнӑ Кавӑрле мучи. Пӗлнӗ вӑл. Урттемсем инҫех мар. Вӗсем ӗнер ҫеҫ Воронеж патӗнче тепӗр хут ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн малалла кайма пуҫланӑ.

Хӗвел анасси инҫех юлман. Ҫак вӑхӑтра Кавӑрле мучи, килтен тухнӑранпа пӗрремӗш хут тупӑ сасси илтнӗ.

Каç пулнă çĕре пĕр яла пырса кĕнĕ. Ял çумĕнчи таса çерем çинче хурлăхлă музыка юрланине илтнĕ. Унта çар тумтирлĕ çынсем: çураннисем, юланутлисем кĕпĕрленсе тăнă.

— Мĕн... Камсем вĕсем?

— Хĕрлисем. Çапăçура вилнĕ юлташсене пытараççĕ,—тенĕ пĕр ватă хресчен. — Паян вăйлă çапăçу пулчĕ кунта. Пирĕн яла хĕрлисем çĕнсе илчĕç. Пирĕн яла çеç мар, паян вĕсем пирĕн уездри ялсене пĕтĕмпех шурă бандитсенчен тасатрĕç. Ху кам вара эсĕ?

Камне пĕлтерсен, Кавăрле мучине хăй патне чĕнсе кĕртнĕ ватă хресчен. Пÿрте кĕрсенех сасартăк пĕчĕкçĕ ача пек макăрса янă вăл.

— Акă ĕнтĕ кур, тăванăм,—тенĕ хресчен, пушă пÿрт ăшне кăтартса.—Çавсем вĕт, çав Шкуро генералăн салтакĕсем мана пĕччен тăратса хăварчĕç. Икĕ ывăлăм Хĕрлĕ Çар ретне хăйсен ирĕкĕпе кайрĕç. Пĕр кин тата 16 çулхи хĕрĕм пурччĕ. Вĕсене вара манăн ывăлсемшĕн вĕчĕхсе, хам умрах пусмăрласа намăс турĕç. Юлашкинчен хăйсемпе пĕрлех илсе кайрĕç.

Татах та нумай каланă хресчен.

— Эсĕ ывăлна шыратăн апла,—тенĕ вăл юлашкинчен. —Тупайăн-ши? Кунта нумайăн вĕт вĕсем.

* * *

Кавăрле мучине красноармеецсем пысăк хаваслăхпа йышăннă. Анчах, Урттем çук.

«Кам пӗлет,—тесе шухӑшланӑ мучи хӑйӗн ӑшӗнче,—тен ҫав ҫерем ҫине алтнӑ шӑтӑка кӗрсе выртнӑ Урттем». Ҫук. Ҫапах та шанчӑк ҫухалман-ха.

Кавӑрле мучине батальон командирӗ хӑй патне чӗнсе илнӗ. Ӑна Урттем ҫинчен хыпар пӗлтернӗ. Урттем, отделени командирӗ, сывӑ. Вӑл хӑйӗн боецӗсемпе пӗрле разведкӑра, тӑшмана йӗрлесе малалла каять. Час-часах сведенисем ярса парать. Акӑ, юлашки сведени, ӑна тин ҫеҫ илнӗ. Тепӗр сехетрен батальон наступлени тума пуҫлать.

— Апла пулсан, эпӗ те,—тенӗ Кавӑрле мучи.—Эпӗ те сирӗнпе пӗрле пыратӑп.

Командир килӗшнӗ.

* * *

Кавӑрле мучи—ответлӑ ӗҫре. Вӑл—обозра. Вӑл—лавҫӑ. Вӑл—патронсем тиенӗ лавӑн ответлӑ хуҫи.

Умра вӑрҫӑ уйӗ—хӑрушӑ уй. Малтанхи кунсенче шурӑ бандӑсем нимӗн йӗркесӗр каялла чакнӑ. Шур бандӑсенчен ял хыҫҫӑн ял тасалса пынӑ. Икӗ кун хушшинче батальон ҫӗр ҫухрӑма яхӑн малалла шунӑ. Анчах, виҫҫӗмӗш кунне, виҫҫӗмӗш кунне вара тӑшман хӑйӗн юлашки вӑйне кӑтартма шут тытнӑ. Хаяр ҫапӑҫу тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах пуҫланнӑ. Хаяр ҫапӑҫу Дон шывӗ хӗрринче пулнӑ. Дон шывӗ хумлӑн-хумлӑн явӑнса юхса

выртнă. Çĕр кисренсе чĕтренĕ. Пăшал, пулемет сасси, тупă пенĕ сас хăлхаран кайман.

— Ку пирĕн юлашки, татăклă тытăçу, юлташсем!—тенĕ паттăр командир. —Ыран ирхине Ростовра пулатпăр. Малалла, юлташсем! Нимĕн хăрамасăр!

Лав пушанать. Пушаннăçемĕн пушанаççĕ патрон тиенĕ лавсем. Кавăрле мучи хăйĕн патронĕсене сулахай флангра шатăртатса ларакан пулемет патне йăтмалла,—çапла приказ. Йăтать вăл. Ывăннине пĕлмесĕр сĕтĕрет. Акă, иккĕ хутларĕ. Виççĕ. Курать. Паттăр пулеметчиксенчен пĕри йăванна. Юн юхтарса выртать. Ăна Кавăрле мучи хăй алли çине илсе обоз патне çитерет, сестрасен аллине парса хăварать. Хăй тепĕр хут каять. Пĕччен юлнă пулеметчик патне патрон йăтса пырать. Вăл çитнĕ-çитменех умран инçе те мар тупă йĕтри кĕрслетсе çурăлать, çĕр çĕклене, тем тарăнĕш шăтăк чавăнса юлать. Пулемет урăх вырăна куçать, тăшман сăнама пултарайман лапамлă хўтлĕхе пăрăнать.

— В атаку... Марш!—тенĕ сасă, командир сасси илтĕнет.—Урра-а-а!..

Пулемет çаплах шатăртататать. Ăна тата малалла куçараççĕ.

* * *

Тепĕр кун ирхине Кавăрле мучи лазаретра выртакан аманнă çынсен хушшинче вăраннă. Унăн мăйне шурă марлĕпе чăркана

пулнă. Мăй тавраш̆е сăрăлтатса ыратнă. Хăй суранланнине вăл тин çеç туйнă. Анчах, суран çинчен мар, чи малтанах Ростов хули çинчен пĕлес килнĕ унăн.

— Хулана çĕнсе илейнĕ-и пирĕн батальон?

— Илнĕ!—тесе кăмăллăн ответленĕ сестра.—Ху та çав хулара вĕт, Ростов хулинчи лазаретра выртатăн.

Ăнланнă Кавăрле мучи. Йĕри-тавра пăхкаланă вăл. Куçĕсемпе такама шыранă. Анчах, йывăр. Суранланнă мăй вырăнтан хускалма паман.

* * *

Икĕ эрне выртнă хыççăн сывалса çитнĕ Кавăрле мучи. Тухтăрсене чĕререн тав тунă. Çакă лазаретрах хăйĕн ывăлне Урттеме тĕл пулнă. Анчах ку тĕлпулу... ытла та кая юлса пулнă. Нимĕн хускалмасăр выртнă Урттем—хĕрлĕ командир. Çапах унăн сăнĕ çинче паттăрла çĕнтерӳ палли савăнăçлăн ялкăшса çиçнĕ. Кавăрле мучи куçĕсенчен вĕри куççуль тумламĕсем шăрçаланса аннă. Вăл кун вăл хăйĕн пĕртен-пĕр юратнă ывăлĕнчен ĕмĕрлĕхе уйрăлса киле тухса килнĕ. «Ытла та шел,—шухăшланă Кавăрле мучи.—Якку ятлă ывăлĕ çуралнине те хăть каласа пĕлтерейрĕмĕрĕм».

* * *

— Тăвансем нумай юн тăкса кĕрешни ахаль сая каймарĕ!—тет Кавăрле мучи.

Халь вăл ялти ятлă çын, колхозра аслă конюх пулса ĕçлет. Ку ĕçри çитĕнӳсемшĕн правлени ăна патефон тата Сталин юлташăн докладне çырнă пластинкăсем парса премиленĕ. Акă паян, апат хыççăн, вăл Яккăва патефон майлаштарма хушрĕ.

Якку—вуннăмĕш класра вĕренекен отличник. Урттем пекех, ашшĕ пекех—çап-çутă сăнлă. Куçĕсем шурăмпуç çăлтăрĕ пек çивĕччĕн ялкăшаççĕ. Çамрăклах унăн çӳçĕсем анлă çамки урлă илемлĕн усăнса выртнă. Якку—кăçал вунсаккăр тултарать. Кăçалхи çул вăл Хĕрлĕ Çар ретне тăрать.

Патефон майланчĕ. Кавăрле мучи итлет. Якку итлет. Аслă Сталинăн доклачĕ пуçланчĕ.

Тулта çурхи хĕвел. Паян ир çеç çуса иртнĕ ăшă çумăрпа лӳшкеннĕ çĕр питне вăл çупăрлать.

1939.

## ТУПА

Паçăрах каç пулнă. Пиçнĕ хыççăн вучах умне антарса лартнă чӳлмекри пăри пătти те ĕнтĕ сивĕнме пуçларĕ пуль. Акуç аппа, пĕччен ларса çиесшĕн мар ăна. Кĕркури йыснана кĕтет. Кĕтет. Кĕркури килмест. Чӳречерен те темиçе хутчен пырса пăхрĕ аппа. Çук. Урамра нимĕн те курăнмасть. Çĕр... Кĕрхи çĕр питĕ те тĕттĕм.

—Мĕншĕн-ха капла?—хăйне-хăй мăкăртатса калаçса илчĕ Акуç.—Мĕншĕн-ха халĕ те çук? Хăй каланă тăрăх, пуху хĕвел аннă çĕре пĕтмеллеччĕ-çке...

Сăпкара канлĕн çывăракан пĕчĕкçĕ Çерук, амăшĕн хумханăвне сиссе пуль тенĕ пекех, ыйхăран вăранчĕ. Чăрсăррăн тапкаланчĕ. Çийĕнчи виттине урисен вĕçнелле ыткăнтарчĕ. Пит-куç çине сĕмсĕррĕн тăрăнакан шăнасене хăваланă чухнехи пек, аллисемпе урлăн та

пирлĕн çапкаланчĕ. Унтан кăштах нăшăклатрĕ те «у-а...а-у» тесе çинçешке сас пачĕ.

—И-и-их... и-и-у-ук! Вăрантăн-им, чĕппĕм? Çывăрас килмест-им?—çепĕççĕн çĕклесе алă çине илчĕ ăна Акуç.

Нимĕнрен те хаклă аннен ăшă кăмăлпа ачашшăн кулса тăракан куçĕсем çине шăтарас пек пăхрĕ Çерук. Çӳп-çӳхе тутасене вăл та култарчĕ. Кулнă хушăра икĕ шăл, иртнĕ эрнере çеç шăтса тухнă шăлсем, сахăр катăкĕ пек шап-шуррăн курăнса ялтăртатрĕç. Амăшĕн чĕрине çав шăлсем хускатрĕç... хумханăвне лăплантарчĕç.

—Часах ак татах та шăлсем тухаççĕ!—терĕ вăл, Çерука йăкăлтик сиктерсе. —Часах ак каття çиме пуçлатăн. Ну-и маттур та... Часах ак аçу пек пысăккă пулатăн.

Аçу пек тесессĕнех Акуç стена çумĕнчи рамка ăшĕнче тăракан Кĕркурин сăн ӳкерчĕкĕ умне утса пычĕ. «Ăçта кунта аçу сан»? —тесе ыйтмасăрах Çерук пĕчĕкçĕ пӳрнипе ашшĕ сăнĕ çинелле тăсса кăтартрĕ. «А-а-а», терĕ вăл.

—Çавă çав, çавă,—терĕ Акуç.

Сăнӳкерчĕкĕ. Ку сăнӳкерчĕкне Кĕркури фронта тухса каяс умĕн ярса панă. Сăнӳкерчĕкне янă хыççăн сакăр уйăхранах киле таврăнчĕ Кĕркури. Хăй сывă. Анчах пулман ун

сылтăм ури. Сылтăм ура ылханлă вăрçă уйне ÿксе юлнă. Патша вăрçи! Мĕн чухлĕ этем ылханман-ши ăна? Мĕн чухлĕ этем макăрса вĕри куççулĕ тăкман-ши? Мĕн чухлĕ вăйпитти çын ĕмĕрлĕхе куç хупса çав вăрçă уйне выртса юлман-ши?! Кĕркурин пысăк телей пулнă. Вăл ухсах пулин те вăрçăран сывă таврăннă. Унтан таврăннă хыççăн çав вăрçăн тискерлĕхĕ çинчен, çав вăрçă юнлă патшапа унăн йыттисемсĕр пуçне урăхран никама та кирлĕ марри çинчен калаçнипе Кĕркури ял халăхĕ хушшинче паллă пулса тăнă.

Октябрьти Аслă революци... Граждăн вăрçи... Вăрçăллă коммунизм тапхăрĕ. Кĕркури —ялсовет председателĕ. Пысăк... пысăк та ответлă ĕç. Ялсовет—вырăнти власть йĕркин тĕп тытăмĕ. Ялти йĕркелĕхшĕн чи малтанах Кĕркури ответлă.

Кĕркури. Унăн сăнÿкерчĕкĕ çине каллех чылайччен тинкерсе пăхса тăчĕ Акуç.

— Мĕнма-ха килмерĕ?.. Мĕншĕн халĕ те çук?..

Сасартăк пÿрт çумĕнче крыльцаран такам хыпаланса кĕни илтĕнчĕ. Çенĕх алăкĕ шăлтăртатрĕ.

—Уç-ха, Акуç аппа!.. Уç!

Пÿрте кĕтÿç Кĕçтенкки кĕрсе тăчĕ. Çийĕпуçĕ унăн тăптăр пылчăк. Хашлатать. Сăмахĕсене те аран çеç сывлăш çавăрса калать.

—Пĕтерчĕç вĕт?.. Кĕркури пиччене пухуран сĕтĕрсе тухрĕç!..

—Камсем?.. Мĕн калатăн эсĕ!

—Пуян Кируксем... Хĕнеççĕ ăна. Чукмарсемпе çапаççĕ... Хĕрлĕ Çар валли çынсем мобилизацилеме, Хĕрлĕ Çар валли пуянсен ытлашши тыррине тăпăлтарса илме вĕрентетпĕр, теççĕ.

—Мĕн калатăн?.. Чăнах калатăн-и?

Акуç аппа çанçурăмĕ вĕри шывпа пĕçертнĕ пек чĕтренсе çӳçенчĕ. Куçĕсем ун тĕксĕмленчĕç. Пĕчĕкçĕ Çерука вăл сăпкана вырттарчĕ. Хăй ăçта каяссине уçăмлăн пĕлмесĕрех Кĕçтенккипе пĕрле урама тухса чупрĕ.

Тĕттĕм каç. Куçран пырса тĕксен те нимĕн курăнмасть. Хреслĕ урам тĕлĕнче, пуху пулнă халăх çурчĕ умĕнче, хаяррăн ахăрса çухăрашни илтĕнет. Лупас айĕсенче автансем шарăлтатса авăтаççĕ. Çурçĕр паçăрах иртнĕ ĕнтĕ.

* * *

Ял вĕçĕнчи таса çерем çинче пĕр тĕмеске. Ку тĕмеске айне 20 çул ĕлĕк ял пуянĕсем хĕнесе вĕлернĕ ухсах Кĕркурин ӳчĕ кĕрсе выртнă. Унăн пуç вĕçĕнче тополь чĕрĕлет. Кунĕн-çĕрĕн хăйĕн шукăль çулçисемпе шапăлтатса ларакан тополь иртнĕ кунсене сахал мар асилтерет. 20 çул ĕлĕк сăпкара выртнă пĕчĕкçĕ Çерук та—паянхи комсомо-

лец—нумай пулмасть, хăй Хĕрлĕ Çар ретне тухса каяс умĕн, амăшĕпе пĕрле çак тополь патĕнче пулчĕ. Акуç аппа йĕркипех каласа пачĕ ăна. Хăрушă кĕрхи каçа тепĕр хут аса илтерчĕ. Çĕнсе илнĕ ирĕклĕхшĕн мĕнле тăмалла иккенне пĕлнĕ атте, эпĕ те пĕлетĕп, кирлĕ пулсан тискер тăшмана аттен вăхăтсăр татăлнă пурнăçĕшĕн те тавăрма хатĕр! —тесе тупа турĕ Çерук хисеплĕ вилтăпри çинче.

1938.

## АШШӖ САМАХӖ

Итлесе ларчӗ-ларчӗ те вӑл:

— Пултараймастӑп чӑтса тӑма, мана парсамӑрччӗ сӑмах,—тесе ҫӗкленчӗ.—Сире ҫитет, ачсем, эсир нумай каларӑр. Ытти сӑмахсене хама валли хӑварӑр...

— Юрать. Сахрун сӑмах илет,—тесе председатель евитлет.—Лӑпланӑр юлташсем! Ыйтатӑп шӑп тӑма. Сахрун мучи, кунта иртсем. Сана... сӑмах.

Ҫӑварсене шыв сыпнӑнах, пуху шӑпах лӑпланчӗ. Сахрун мучи хӑй тӑрӑххӑн пӑха-пӑха, яш ҫамрӑксен пуххи умне утса тухать. Нимӗн хумханмасӑр-тумасӑр, вахтӑра тӑракан капитан пек тӳп-тӳррӗн тӑрса вӑл сӑмахне пуҫлать.

— Тавтапуҫ сире, ачсем. Мана эсир, нимӗн сӑмахсемсӗр, лайӑххӑн ӑнлантӑр. Манӑн хуйха, калас пулать, ҫав тери пысӑк хуйха ҫийӗнчех лӑплатрӑр. Кулянмастӑп. Кулянас пирки шутламастӑп та. Ҫук. Пӑшӑрханмастӑп эп Павӑлшӑн. Телейлӗ пулчӗ вӑл...

Манӑн пӗртен-пӗр ывӑл. Йывӑр вӑхӑтра ҫуралчӗ пулин те телейлӗн, ҫӑмӑллӑн ҫитӗнсе йӗкӗт пулчӗ. Нумаях пек те мар вӗт. Вӑл ҫуралнӑ хыпара илтсе хавасланнине ӗнерхи пекех ак, паянхи пекех астӑватӑп. Лутра маччаллӑ казарма—патша казарми. Кӑрчанкӑ сӑнарлӑ стенисем ун ултӑ уйӑхранпа ытти юлташсемпе мана та чунран-чӗреренех йӑлӑхтарса, курас килми пуличченех йӑлӑхтарса ҫитерчӗ. Ҫывӑрма выртас умӗн ҫӗмрӗк конвертлӑ пӗр ҫыру килсе тыттарчӗҫ.

— Мӗншӗн вара уҫӑ ку? Кам вуланӑ?

— Цензура!—хыттӑн ответлерӗҫ.

Чӗнмерӗм. Вулама пикентӗм. Килтен ҫыраҫҫӗ. «Эпир ӗнтӗ виҫӗ чун ҫеҫ мар, тепри те ҫуралчӗ,—тет ман арӑм.—Тӑватсӑмӑр та кулленех савса асӑнатпӑр сана, савса саламлатпӑр. Юратса юлатпӑр. Пурсӑмӑр та сывӑ. Сана та ырлӑх-сывлӑх сунатпӑр. Килӗшетӗн-и, чунӑм, ҫӗнӗ кайӑка Павӑл ятлӑ хутӑм?..»

Павӑл. Тахҫантанпах кӗтнӗ ывӑлӑм манӑн. Тахҫантанпа кӗтнӗ ывӑлӑм ҫуралнӑ. Павӑл. Куҫ умнех тухса тӑрать вӑл. Акӑ манӑн ывӑл. Манӑн хӗрӗмсем... ывӑлӑмӑн аппӑшӗсем. Ҫырӑва тепӗр хут, тата тепӗр хут вуласа тухатӑп. Павӑл. Ӑҫта эс, Павӑл! Часах курайӑпши сана эпӗ?..

— Становись!—янӑрарӗ команда. — Взять ружье... Взять все припасы!..

Йытăран сасартăк хăраса ӳкнĕ кĕтӳри сурăхсем пек кĕпĕрленсе кĕрлеме пикенчĕç казармăри салтаксем. Пурте пĕр самантрах строя тăрса йĕркеленчĕç.

— По порядку-у-у... расчитайсь!

Хĕрринче, офицер çине пăхнă май чĕтренсе тăракан салтак мăйне сулахаялла пăрăнтарса шут пуçласа ячĕ:

— Первый!

— Второй!

— Третий!

— Семнадцатый!—терĕм эпĕ те хамăн черете ирттерсе. Çапла вара хамăр ротăри «семнадцатый» салтак пулса фронта тухса кайрăм. Унта мĕн пулни çинчен каламасан та паллă. Çапăçнă ĕнтĕ. Йытă пек пурăннă. Тепĕр виçĕ кунтанах манăн умри вунçичĕ юлташран виççĕшне çеç сыввăн курма пулчĕ. Хыçрисем тата... хыçра мĕн чухлĕ пĕтнĕ. Хисеплесе те пĕтерейменĕн. Виçĕ çул ытларах выçăллăн-тутăллăн кавсăлса, кунсеренех, халь халех ак, минутсеренех, чĕрвилĕм алăкĕ умĕнче юн ашса çӳренĕ хыççăн:

— Патша сирпĕннĕ!.. Юнлă патша текех çук!.. Власть хамăр аллăра!—тенĕ сасă Днепрогэс шыв сикки пек хăватлăн янăрарĕ.

— Вăрçă та чарăнать-и?

— Чарăннă паçăрах! Часах килсене саланатпăр.

Кил! Тăван килçуртăм куç умне тухса тăчĕ. Павăл. Пĕртен-пĕр ывăлăм. Павăл. Унăн аппăшĕсем ак... манăн чун патĕнчи хĕрĕмсем. Çыру çыратăп: «Кĕтĕр мана. Часах килте, сирĕн патăрта пулатăп. Савăнăр. Хавхаланăр. Власть хамăрăн алăра!..»

— Становись!—каллех хайхи сасă, каллех хайхи команда.—Взять ружье! Взять все боевые припасы!..

Строй каллех. Каллех салтаксем строя йĕркеленчĕç. Утатпăр. Кикен тымарĕ чăмласа антăрана выльăхсем пек пĕр-пĕрин çине вăйсăррăн пăхса тарăн шухăш ăшне путатпăр. Умра: «Война до победного конца!» теекен сăмахсемлĕ ялав, Вăхăтлăх правительствăн ялавĕ выçăхнă çăхан çуначĕсем пек лăпăстатса вĕлкĕшет. Вăрçă каллех. Каллех кисренў... çĕр чĕтренсе кисренет. Каллех ылханлă кăшкăрашу та куççуллĕ макăру. Çапăçатпăр каллех. Каллех юн юхтаратпăр. Вилесем урлă вилĕм алăкĕ умне çул тытатпăр. Мĕншĕн? Ку татти-сыпписĕр вăрçă камшăн? Патша халĕ çук вĕт?.. Власть хамăр алăра!

— Тĕрĕс калатăн. Власть хамăр алăра. Хамăршăн вăрçатпăр. Итле! Итле те тăнла! Война до самого победного конца!

— Ултав! Ултав! Хамăршăн мар!—теекен чи хăватлă хăват, чи хăватлă чĕрĕ шухăш ывăнса çитнĕ салтаксен хушшинче кунсеренех çивĕчленсе пыма пуçларĕ.

Октябрь! Октябрьти Аслă революци Вăхăтлăх правительствăна сирпĕнтерчĕ. Салтакăн чĕри харсăрланчĕ. Аслă çулпуçсен кăварлă сăмахĕсемпе чунтан чĕререн килĕшсе, вăл çĕнтерӳ пирĕнте иккенне ĕненсе, юлашки те татăклă çапăçăва уттарчĕ.

...Килтĕм киле. Чи малтанах Павăлăма, тăваттă тултарнă ывăлăма ыталаса чуптурăм... Ĕмĕтĕм... Хĕвелĕм! Акă, иртнĕ кĕркунне çеçха Хĕрлĕ Çар ретне ăсатрăмăр ăна. Тăвансем, кӳршĕ-аршăсем пуçтарăнчĕç. Эсир те, ачсем, пурччĕ пулас. Астăватăр пулĕ!

— Ан хурлан, хунĕм,—терĕ кĕçĕн кĕрӳ, ман çине пăхнă май, ăсатакансене пурне те илтĕнмелле сасăпа.—Павăла телейлĕ тапхăр, телейлĕ те тулли пурнăçăн ытамĕ хавхалантарса çитĕнтерчĕ. Павăл хăйĕн хастарлăхне пула хамăр ялти ятлă йĕкĕтсенчен, хамăр артельти чи лайăх стахановецсенчен пĕри пулма пултарчĕ. Павăл, санăн юратнă ывăлу, пĕтĕм тĕнчипе чаплă та хăватлă Хĕрлĕ Çар ретне тăма юрăхлă пулчĕ. Хурланмалла мар санăн, хунĕм. Вăхăтлăха çеç пулин те, Павăлсăр юлатăп тесе кулянма кирлĕ мар.

Тĕрĕс калать кĕçĕн кĕрӳ. Пĕлмесĕр каламасть вăл. Хăй те вĕт нумай пулмасть çеç çар ретĕнчен килнĕ. Халĕ те районри чи лайăх колхозсенчен пĕринче председатель пулса ĕçлет. Ăслă çын. Мĕн каламалла. Пултарулă. Аслă кĕрӳ ăсатура пулаймарĕ. Вăхă-

чĕ те сахал ҫав. Ҫĕр ҫинче те сахал утса ҫӳретĕп, тет. Яланах вĕҫет... пĕлетĕр—орденлă летчик.

Юлашки хут алă патăм Павăла. Сывă пул, ывăлăм, терĕм. Урăх мĕн калас. Амăшĕ пăртак хурланчĕ те пулас. Ĕсĕклет. Хăй нимĕн те каламасть. Чĕнмест. Уйрăлу ҫав. Мĕн каласан та, хăй аллипех тыткалать вăл сана уйрăлу. Хамăн та кăмăлăм ҫемҫелчĕ:—Телейлĕ ҫит. Ҫитсенех ҫыру ҫыр,—терĕм те ывăлăма икĕ аллăмпа ыталаса хыттăн-хыттăн чуптурăм.

Павăл. Вăл пиртен уйрăлса кайни ак ҫулталăк ҫитрĕ. Ĕнерхи телеграмма... Ҫук. Каламасан та пĕлетĕр. Командовани парать ман пата телеграмма: «Павăл ывăлу санăн чикĕ пăсакан тăшмансем пуҫласа янă ҫапăҫура паттăрăн вилни ҫинчен хурланса пĕлтеретпĕр...»

Вилнĕ! Ҫук. Кулянмастăп эпĕ уншăн. Телейлĕ пулчĕ вăл. Чи вăйлă ҫĕршывăн чи вăйлă паттăрĕсен хисеплĕ вилĕмĕпе вилчĕ. Ан манăр, атьсемĕр. Эсир ак, Павăлăн тантăшĕсем. Призыва ҫирĕм иккĕн кĕрсе ҫирĕм йĕкĕт Хĕрлĕ Ҫар ретне юрăхлă пулнă. Ырлăхсывлăх сунатăп сире! Сире эпĕ ҫеҫ мар, пĕтĕм ял халăхĕ, пĕтĕм ҫĕршыв савса саламлать, сирĕнпе мухтанать. Тавтапуҫ сире. Мана кулянма хушмастăр эсир.

Колхоз клубне тулнă ҫамрăксем Сахрун мучин сăмахне тăваллăн алă ҫупнипе ответ-

лесе çирĕплетрĕç. Хуткупăс янăраса кайрĕ. Юрă пуçланчĕ:

Эпир хатĕр, Ворошилов чĕнтĕр çеç,
Чĕнтĕр çеç Буденный—çивĕч командир, —
Шĕлкăвар пек утсене кĕçентерсе,
Ăмăрткайăксем пек вĕçĕпĕр эпир!
Эй, кашлать, кашлать хирте колхоз тырри,
Колхоз халăхĕ ĕçлетçке савăнса,
Тăшман юнлă аллине çеç тăстăр-и—
Вилĕм тупĕ ăçтан килнĕ çавăнтах!

Сахрун алă çупать. Сахрунпа пĕрле пĕтĕм халăх хăйĕн паттăр ывăлĕсене савса саламлать. Чи ăшă кăмăлпа вăл вĕсене, хĕрӳллĕн саламласа тĕнчери чи паттăр çар—Хĕрлĕ Çар ретне ăсатать.

1939.

# ДОРИАДА

**(Кавказран килнĕ блок-нотран)**

Çумăр пĕлĕчĕсенчен те çӳлĕ чăнкă сăртсен хушшинчен пĕр пĕчĕкçĕ çырма шăнкăр-шăнкăр юхса айлăмалла анать. Тăрна куç тек таса, тăп-тăрă шыв. Тăрă шывлă пĕчĕкçĕ çырма чуллă сăртсем хушшинчен аннă-анманах тинĕс шывĕпе хутшăнмасть, айлăмпалла, чылай лерелле, кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле, кукăркаланса чăсăлать. Çырма икĕ енпе йывăç пахчисем ешĕреççĕ. Ку пахчасенче апельсин, иçĕм-çырли, мандарин, черешня, слива тата ытти, татах та нумай-нумай тĕслĕ йывăçсем чĕрĕлеççĕ.

Çакă, юмахра мар, чăн-чăн пурнăçри илемлĕхпе капăрланнă пахчасен хыçĕпе тап-такăр сукмак тăсăлать. Сукмак хĕррипе, кашни çĕр утăмсеренех, сăрлă тенкелсем лартса тухнă. Пĕр тенкелĕ çинче ав—икĕ çамрăк час-часах пĕр-пĕрин çине тата шăнкăр-шăнкăр юхса выртакан çырма шывĕ çине пăхса лараççĕ. Çамрăксенчен пĕри—çавра питлĕ хĕр, таса

çăл шывĕ пек тăп-тăрă куçлăскер, гитарăпа вылять. Çумри каччă ун çине, унăн пысăк маçтăрлăхпа хуçкаланса вылякан пўрнисем çине пăха-пăха çурма сасăпа такмаклать:

Ăна эп куртăм ир çинче,
Вăл çăл панчен килетчĕ.
Çут йĕс хăлăплă витринчен
Мана хĕр шыв ĕçтерчĕ.
Тавтурăм эпĕ кăмăлтан:
Мĕнле аван шыв, терĕм.
„Аван çав“ терĕ те вăл та,—
Урăх ним чĕнмерĕ.

Хĕр йăл-йăл кулать. Куçĕсем çиçсе ялкăшаççĕ. „Юрла-ха, тата юрла“ тесе каласса нах туйăнать. Каччă хавхаланать. Каллех такмаклама пуçлать:

Ăна эп куртăм кăнтăрла,
Вăл тинĕсре ишетчĕ.
„Иш эс те, ăмăрт манпала!“
Тесе хĕр мана сĕнсеччĕ.
Итлерĕм эпĕ кăмăлтан:
Капла аванçке, терĕм.
„Аван çав“ терĕ те вăл та,—
Урăх ним чĕнмерĕ.

Гитара чарăнмасăр вылять. Унăн тĕрĕссĕн ĕнтернĕ хĕлĕхĕсем çамрăк чун-чĕрене чăнкă сăртсенчен те çўлерех çĕклентерсе илемлĕ саслăн янăраççĕ. „Юрла-ха, татах юрла“ тесе

калассӑнах туйӑнать. Каччӑ хавхаланать. Каллех вӑл, каллех хӗр куҫӗнчен пӑха-пӑха такмаклать:

Ăна эп куртăм каҫхине,
Садра вăл, сцена ҫинчеччĕ.
Ем-ешĕл йывăҫ пахчине
Хĕр сасси чĕнтĕрлетчĕ.
Итлерĕм эпĕ кăмăлтан:
Аван юрланҫке, терĕм.
„Чăнах-и?“ терĕ те вăл та,—
Урăх ним чĕнмерĕ.

Хӗр вылять. Такмакланӑҫемӗн ӑна—выляма ҫӑмӑлланнӑҫемӗн ҫӑмӑлланса пынӑн туйӑнать. Пӑхать вӑл: шӑнкӑртатса юхакан ҫырма шывӗ ҫине, инҫех те мар саралса выртакан хумлӑ тинӗс ҫине, тўпери хӗвел ҫине—тавраллӑха сӑнать хӗр. Хутран-ситрен ҫумри такмакҫӑ ҫине пӑха-пӑха илет. Каччӑн йӑл-йӑл куллине хирӗҫ вӑл та ӑшӑ куҫлӑ кулӑпа ответлет.

Хӗр—Дориада ятлӑ.

Асӑннӑ такмакри сӑмахсем пӗтӗмӗшпех хӑйне тивеҫҫӗ иккенне хӗр лайӑх ӑнланать. Ҫавӑнпа йӑл-йӑл кулкалать вӑл. Калать:— нӑпар мар юрлатӑнҫке, тет.

Ирсеренех Дориада ҫӑл патне каять. Шыв ӑсса килет. Апат-ҫимӗҫ хатӗрленӗ май, ун таврашӗнче яланах пӗр карчӑк уткаласа ҫўренине курма пулать. Карчӑк капӑр тумланнӑ. Ҫампӑк Дориадӑна час-часах тӑп-тӑп сар-

са илет вӑл. Ҫав тери кӑмӑллӑн, ӑшшӑн калаҫать. Ҫав тери хаклӑ уншӑн Дориада, ҫав тери паха иккенне никам каламасӑрах туятӑн.

Дориада ҫимӗҫ пахчине тухать. Кашни йывӑҫ тӗмине кашни кунсерен сӑнать. Ма тесессӗн, пӗлет: пахчари йывӑҫсене сӑнасах тӑмасассӑн, пӑхмасассӑн, тӗрлӗрен сиен кӳрекен хурт-кӑпшанкӑсене вӑхӑтра тасатмасассӑн,—вӑл йывӑҫсем нумаях ӑнӑҫуллӑ ҫимӗҫ парассине ан та кӗт. Дориада ӗҫлет. Ашшӗ мӗн хушнӑ—ӑча итлет. Ашшӗ—пахча ӑстаҫи. Таврари колхозсем ӑна час-часах хӑйсем патне чӗнсе ҫӑмӑл машинӑпах лартса каяҫҫӗ те, кирлӗ таран консультаци илсе юлаҫҫӗ.

— Ҫамрӑках мар ӗнтӗ манӑн атте,—тет Дориада. —Эпӗ унӑн чи кӗҫӗн хӗрӗ пулатӑп. Манран аслисем тата ултӑн.

Ултӑн. Вӗсем ҫинчен, хӑйӗн савнӑ тӑванӗсем ҫинчен, калать Дориада. Вӗсем хӑшӗсем Тбилиссинче, Сухуминче, иккӗшӗ Мускавра. Вӗсенчен хӑшӗсем доцент е инженер, учитель, доктор пулса ӗҫлеҫҫӗ. Тепри, Арктика институтӗнче вӗренекенни, ҫурҫӗре практикӑна кайнӑ.

— Ху вара? Вӗренместӗн-им эсӗ?

— Вӗренетӗпҫке. Каникула ҫеҫ килнӗ...

* * *

Каҫхине тинӗс хӗрринчи ем-ешӗл йывӑҫ пахчинче канакансен савӑнӑҫлӑ вечерӗ пулчӗ. Пӗр пӗчӗкҫӗ инсценировкӑна пионерсен ла-

герӗнче канакан ҫамрӑксем маҫтӑр выляса панӑ хыҫҫӑн, сцена ҫине юрӑҫӑсемпе ташӑҫӑсем тухрӗҫ. Вӗсем хушшинче кулса тӑракан куҫлӑ Дориадӑна часах палласа илтӗм.

— Дориада!—терӗ вечера ертсе пыраканӗ: —Халӗ ӗнтӗ пирӗн программа тӑрӑх, Дориада тухса „Поднятая целина" оперӑн пӗр арине юрласа парать. Дориада—Мускавра, консерваторинче вӗренекен студентка

Тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗ халӑх. Пысӑк маҫтӑрлӑхпа юрласа пачӗ ҫамрӑк Дориада. Хапӑл йышӑнчӗҫ ӑна. Татах та, татах юрлама ыйтрӗҫ. Дориада итлерӗ. Ҫакӑ каҫ вара Дориада камне, вӑл пулас пултаруллӑ актриса иккенне лайӑххӑн тавҫӑртӑм. Халӑхпа пӗрле хавхаланса алӑ ҫупрӑм. Алӑ ҫупакансен хушшинче хайхи капӑр тумланнӑ карчӑка та, Дориадӑна час-часах тӑп-тӑп савса ачашлакан карчӑка, курма пулчӗ. Карчӑк. Унпала та эп ҫавӑнтах паллашрӑм. Вӑл—Дориада ашшӗн асламӑшӗ, ҫӗр те сакӑр ҫула ҫитнӗ телейлӗ карчӑк.

— Аттерен вӑл хӗрӗх ҫул, манран тӑхӑрвунӑ ҫул аслӑ,—терӗ Дориада.

Дора... Дориада.

Ӑна эп куртӑм тепӗр кун,
Вӑл—килӗнче... ҫут калушпаччӗ.
„Кам тетӗп эп, эсир-и ку?"—
Тесе мана хӗр алӑ пачӗ...

---

1939

Цена 2 руб. 50 коп.

П. МИТТА

РАССКАЗЫ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941